Ч(Чув)
М29
26000-чув

Любовь Мартьянова

# Сенкер ачалăх



Национальная библиотека ЧР
4-026000

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

26000 чв

Зак. 3288.

аф
С(Чув)
М29

**Любовь Мартьянова**

# Сенкер ачалăх

ҪАЛАВСЕМ



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1983

83.3 Чув
М 23

26000 чув.

ПРОВЕРЕНО
2010

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

**Мартьянова Л. В.**

М 23 Сенкер ачалăх: Калавсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1983 ç.

10 п.

Çамрăк чăваш çыравçи Л. Мартьянова хăйĕн калавĕсенче паянхи шкул ачисен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарать.

83.3 Чув

М $\frac{4702650000-034}{М\ 136(03-83)}$ 77—83

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç.

# Малька

Сакăр çул пурăнчĕ Герман пиччесем патĕнче Малька. Кашни кĕтесе, кашни чул катăкне паллать. Çыннисемпе выльăх-чĕрлĕхĕ пирки калаçма та кирлĕ мар: хăйсен килĕнче халь кăна çăмарта ăшĕнчен тухнă чĕппе те ют чĕпĕсемпе пăтраштармасть. Ку хамăрăн тенĕ пекех шăршлакаласа илет, нимĕнле курак-çăхан тавраш те вăл чĕпĕ тавра ан явăнтăр. Питĕ тавçăруллă, ăслă йытă çав Малька. Сывлăхĕ кăна унăн юлашки вăхăталла хавшакланса пычĕ. Хуçасем ăна темĕнле те сиплеме тăрăшрĕç, вăл пур— ӳсĕрет те ӳсĕрет. Пĕр кĕтесе кайса выртать, кунĕпе чĕптĕм апат çимест. Пĕлет-ха вăл, пĕр-ик кунлăх вăрмана кайса çӳресенех иртсе каймалла. Çакăн пек ĕмĕтпе пурăнатчĕ те ĕнтĕ вăл.

Анчах пĕррехинче Герман пичче киле тăвата-пилĕк уйăхсенелле çитнĕ йытă çури çавăтса пычĕ, Малька çинелле пăхса, халь илсе килнине ачашлакаларĕ. Малькăн чун-чĕринче хăй сисмесĕрех кĕвĕçӳ вăранчĕ. Вăл йытă çури çине сиксе ӳкме те хатĕрччĕ, хуçин лăпкă сăнне курсан кăна вырăнтан тапранмарĕ. Лешĕ тахçантанпах çакăнта пурăннă майлах тыткаларĕ хăйне, çăмламас та пысăк йытăран пĕрре те шикленмест тейĕн çав. Ячĕшĕн çеç харлаткаласа илчĕ те Малька умĕнчи чашăка çулама тытăнчĕ.

Пурне те яратчĕ Малька хăйĕн чашăкĕ патне, хур-кăвакалне те, сыснине те... Ара, хăй сыхласа, хăй хӳтĕлесе пурăннă-çке вĕсене. Ку вара... Ăçтан,

мĕн тума илсе килчĕç-ха ăна? Вăл йытă çури çине сиксе ӳкме тăчĕ, анчах хуçи маларах ёлкĕрчĕ, ырат-тармаллах хытă тапрĕ вăл Малькăна аякран.

Володя, кӳршĕ ачи, çакна хăй куçĕпе курса тă-нăскер, ним тума аптрарĕ, Малькăна кунтан çавăтса илсе каясси килчĕ унăн. Йытăсене пĕчĕкренех юра-татчĕ-ха вăл, анчах çак чăмăркка, ларма-тăма пĕл-мен çура, ун кăмăлне килмерĕ.

Йытă çурине Пират тесе ят пачĕç. Икĕ кун пу-рăнчĕ Малька унпа пĕр картишĕнче. Хуçисем Пират тавра кăна явăнкаларĕç. Виççĕмĕш кунне тӳсеймерĕ Малька, сакăр çул пурăннă кил-çурта яланлăхах хăварса, çывăхри вăрман еннелле чупрĕ.

Германсен килĕнче пурнăç ку хушăра яланхил-лех шурĕ. Пĕр-икĕ кун аса илкелерĕç-ха вĕсем килĕн-чен тухса кайнă Малька çинчен, каярах манса кай-нă пек пулчĕç. Анчах пĕррехинче тикĕссĕн пыракан пурнăç пăсăлчĕ: кĕтӳрен икĕ сурăхĕ таврăнмарĕ. Ăçта кăна çитмерĕ пуль Герман вĕсене шыраса, кӳр-шĕ ялсенче те пулчĕ. Çук, тупаймарĕ сурăхсене. Ин-кек çине синкек тенĕн, тата темиçе кунтанах пăру та пач çухалчĕ.

* * *

Вăл кун Малька ял патнех çитнĕччĕ. Çерем çине выртрĕ те, пуçне малти урисем çине хурса, ялалла тинкерчĕ. Хапхасем уçăлса хупăнни те, хур-кăвакал какăлтатни те, этем калаçăвĕ те — пурте-пурте ăна иртнине аса илтерчĕ. Сисмесĕрех нăйкăшкаласа ил-чĕ вăл. Çав самантрах сиксе тăчĕ те, такам пуçран çапнă пек, ял еннелле вирхĕнчĕ, пурне те маннă пек пулчĕ, хӳрине пăлтăртаттарчĕ, вĕрчĕ, çавăнтах, тем аса илнĕн, тăп чарăнса тăчĕ, каялла ыткăнчĕ.

Çук, выçлăх аптратмарĕ ăна, çуллахи вăхăтра пĕр хырăма тăрантмалăх таçта та апат тупма пу-лать, сывлăхĕ те çирĕпленсе çитрĕ. Урăххи, сирсен

сирёлми тунсăх туртрĕ ăна ял енне, çавăнтах тата темĕн тытса чарчĕ.

Çырма хĕрринче çӳрекен кĕтӳ патĕнчен иртнĕ чух хăй патне пĕр картишĕнче ӳснĕ икĕ сурăх чупса пынине асăрхарĕ. Чăтаймарĕ вăл, çурăм çине месерле выртса, нăйкăшма тапратрĕ, тăватă урине çӳлелле çĕклесе çĕр çинче йăваланчĕ, сăмсине, тем шăршланă пек, тăпра ăшнелле чикрĕ, малти урисемпе çĕре çапрĕ... Уйрăлмарĕç унран сурăхсем, вăрмана çитичченех ун хыççăн чупрĕç. Малька вара ниçта кайса кĕрейми савăнчĕ.

Тепĕр темиçе кунтанах, ял еннелле кайсан, йытăпа пĕрле Герман пиччен пăрăвĕ те ерсе пычĕ.

Виççĕмĕш эрне пурăнаççĕ ĕнтĕ вĕсем çапла вăрманта. Çак вăхăтра пĕр-пĕринпе тата ытларах çывăхланчĕç. Малька вара, малтанхи кунсенчи пĕччен пурнăçпа танлаштарсан, сисĕнмеллех улшăнчĕ. Уламарĕ вăл унчченхи пек, ял патне те сахалтарах çӳрерĕ. Çĕрлехи вăхăтра вăрманта вăл халиччен питех вĕрместчĕ, халĕ вара хăйне хуçалла тыткаларĕ, кашни сассах тăнларĕ, вĕрчĕ. Апат енчен, чăнах та, кăштах япăхланчĕ ĕнтĕ. Пăрупа сурăхсем унран пачах та юласшăн мар, хыççăнах çӳреççĕ, çавна пула Малькăна лекес чĕрчунсем шăв-шава илтсе тарса пытанаççĕ. Анчах ун пирки Малька пĕрре те пăшăрханмарĕ, мĕншĕн тесен халь вăл пĕччен мар, сакăр çул картишĕнче выльăхсемпе пурăнма хăнăхнă йытăшăн ку чи хакли.

...Володьăпа ашшĕ чылаях йывăр тиенĕ лава хыçалтан тĕртсе пулăшса пыратчĕç. Кун каç еннелле сулăннă. Кустăрма пылчăк çинче йывăррăн çаврăнать. Ĕçлесе ывăннăскерсене нимĕн те илĕртмерĕ: пуç тăрринче каçса кайса юрлакан кайăксем те, куç тулли вăрман илемĕ те, йывăçсем хыçне пытанма хатĕрленнĕ ача тетти пек çавракa хĕвел те.

— Чăтаймастăп урăх, атте, тăхта-ха, çырмана

чупса кайса шыв ёҫсе килем, тута-ҫăвар веҫ типсе кайрĕ,— терĕ Володя.

— Сĕт кĕленчипе мана валли те ăсса кил-ха, эппин,— хирĕҫлемерĕ ашшĕ.

Володя чăтлăхалла чăмрĕ. Сасартăк инҫех мар, умрах йытă вĕрни илтĕнсе кайрĕ. «Малька? — вĕлтлетрĕ пуҫра шухăш.— Ҫавăн сасси вĕт?» Темиҫе йытă пĕр харăс вĕрсен те уйăрса илет Володя ун сассине ыттисенчен.

— Малька, Малька! — кăшкăрчĕ вăл чупнă май.

Малтан йытта мар, пăрăва асăрхарĕ. Лешĕ, шыв ёҫме ҫырма хĕрне аннă-ши, хырăмĕ таранах лачака ăшне кĕрсе ларнă. Пăхсах паллă, чылай хушă тăрать вăл кунта. Сивĕ-ши ăна, чĕтрет. Тата пĕр вырăнта тăракан пăрăва шăна-пăван та аптратса ҫитернĕ. Унпа юнашарах Малька тăрать. Пăру умне пырать те хытă ҫĕре сиксе тухать. «Ҫак ҫулпа кил, кунтан кил, ман пек сик»,— тесшĕн пулас вăл ăна? Ку, паллах, ним те ăнланмарĕ, ăҫта унта, вăйĕ пачах та юлман.

Володя ашшĕне чĕнчĕ. Иккĕшĕ пĕр сехет пек тапаҫлансан, аран-аран пăрăва типĕ ҫĕре кăларчĕҫ. Инкеке лекнĕ выльăх пĕр-ик ҫăвар курăк ҫырткаларĕ те хăвăртрах ҫĕр ҫине выртрĕ. Ывăннă ёнтĕ, хырăмĕ те выҫнă. Ҫавăнтах ун ҫумне икĕ сурăхпа йытă пырса тăчĕҫ.

— Пулать иккен пурнăҫра тĕлĕнтермĕш,— терĕ Володя ашшĕ, вĕсем ҫине пăхса.

Кăштах каннă хыҫҫăн патак илчĕ те пăрупа сурăхсене хăвалама тапратрĕ.

— Хăварма юрамасть вĕсене, ăҫтан шанан, юлашки вăхăтра кашкăрсем те курăнкаларĕҫ кунта, тем килсе тухĕ. Савăнтарар-ха Герман пиччӳне.

Володя ашшĕ сурăхсем тăракан вырăналла пĕр утăм кăна турĕ, Малька шăртне тăратса хăрлатма тапратрĕ. Ним те ăнланаймарĕ-ха вăл, халь кăна ырă тунă ҫынсем усал тăвĕҫ-ши тенĕ пек иккĕленсе

пăхрĕ Володьăпа ашшĕ çине. Сурăхсем йăпăр-япăр йытă хыçне пырса тăчĕç те урисемпе çĕре таплаттарма тытăнчĕç. Тармаççĕ те-çке-ха хăйсем, шанаççĕ ĕнтĕ хăйсене хӳтĕлекене. Темиçе хутчен те хăтланса пăхрĕ Володя ашшĕ сурăхсем патне çывхарма, анчах кашнинчех йытă ун çулне пӳлсе тăчĕ.

Ну, ним тума та çук, вăхăт иртет, çĕрле тулли лавпа яла çитме çăмăлах мар, каймалли тата нумай-ха. Сурăхпа пăрăва çавăтса кайма вĕсен ытлашши вĕрен тавраш та çук. «Çитнĕ-çитменех Германсене пĕлтермелле»,— тесе лав патнелле утрĕç вĕсем.

Герман аслă ывăлĕпе пĕрле çавăн чухнех вăрмана пуçтарăнчĕ. «Ара, ирччен таçта çитме пултараççĕ-çке вĕсем, пĕр вырăнта выртас çук ĕнтĕ»,— хыпаланчĕ Герман. Вĕсемпе пĕрле кайма Володя та хаваспах килĕшрĕ. Темшĕн питĕ шеллет вăл Малькăна.

Вăрманне чиперех çитрĕç-ха, анчах ăçта ĕнтĕ унта, тунката мар вĕт вĕсем, чĕрĕ чунсем, шыв хĕрринче ура йĕрри çеç тăрса юлнă. Ирчченех çӳрерĕç кӳршĕсем çак таврара. Володьăпа Саша иккĕшĕ те йĕпенсе шăнса кайрĕç. Ирхи сывлăм шапăрах тăкăнать йывăç çинчен. Герман пичче аптрамасть-ха, пĕлнĕ пекех фуфайка тăхăнса тухнă.

Вăрман варринчи сукмак çине тухрĕç кăна, вĕсем умĕнчен Малька чупса иртсе кайрĕ, хыççăнах— икĕ сурăхпа пăру. Çĕрĕпе çӳресе ывăнни те таçта кайса кĕчĕ, пурте вĕсем хыççăн ыткăнчĕç. Сурăхсене пӳлме хатĕрленнĕччĕ çеç, лешсем çаврăнчĕç те тепĕр еннелле тарма тапратрĕç. Хăваласа çитесси пирки ан та шухăшла.

— Малька,— терĕ сасартăк Герман пичче,— Малька! — сасси унăн темĕнле айăпа кĕнĕн чĕтренсе тухрĕ.— Кил-ха кунта, кил.

Лешĕ найкăшса ăна хирĕç ыткăнчĕ.

— Малька, атя киле, атя,— пăшăлтатрĕ хăй çумне тĕршĕнекен йытта ачашласа,— ан çиллен ĕнтĕ мана, ват ухмаха, атя. Унтан хыттăн: — Володя,

Саша, кайăр ялалла, хăйсемех пыраççĕ вĕсем,— терĕ.

Чăнах, вăрмантан тухаспа сурăхсемпе пăру та хуса çитрĕç. Малька, хушăран-хушăран чаранкаласа, вĕсене кĕтсе тăчĕ, унтан татах хуçи еннелле ыткăнчĕ.

Ял çумĕнче Герман пичче аллине Володя хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Володя, сирĕн йытă çук, илсе кай Пирата, халь çамрăк вăл, хăвăрт хăнăхать,— терĕ.— Мĕн тума кирлĕ пире икĕ йытă, пирĕн Малька пур-çке. Эпир кунтах тăратпăр, чуп, маларах кайса илсе тух Пирата. Анчах асту, лайăх усра, ан кӳрентер, вара вăл та пирĕн Малька пекех ăслă пулĕ.

Володя савăнсах кайрĕ, çав йытă çурине вăл питĕ лайăх пăхса ӳстерĕ. Малькăн та пурнăçĕ унччен хи пекех савăк пулĕ.

## Пуçтахсем

Сергей паян хăех вăранчĕ. Ара, ĕнер вĕсем Олешпа çырлана кайма калаçса татăлнă-çке.

Сергейĕн улттăмĕш класа каймалла кăçал, Олешăн — тăваттăмĕшне. Апла пулсан та вĕсем яланах пĕрле: шкулта та, килте те. Хăш чухне аслăрах класра вĕренекенсем кĕçĕнреххисене кăштах «тĕккелесе» илес йăла та пур. Сергейпе Олеш ун пек мар вара, тепĕр енчен илсен, вĕсене пĕр çулхисем теме те пулать. Сергей хăйсемпе пĕрле вĕренекеннисенчен кăштах пĕчĕкрех, Олешĕ вара хăйсен класĕнче чи пысăкки. Ак паян çырлана каяс шухăша та Олешах пĕлтерчĕ. Чылай чухне вăл хăйне Сергейрен аслăрах та тыткалать.

— Асанне,— терĕ Сергей вăраннă-вăранманах,— çумăр çуман-и? Вăрмана кайма пулать-и?

Анчах хирĕç никам та сас памарĕ. Çыран хĕррине туртса кăларнă çăрттан çури пек турткаланса илчĕ те вăл вырăн çинче, васкаса ура çине сиксе тăчĕ.

«Ăçта кайнă-ши асанне? Унран ыйтмасăрах кайсан ятламĕ-ши?» Унтан, сĕтел çинчи ăна валли хатĕрлесе хăварнă ирхи апата курсан, лăштах пулчĕ. Апла пулсан, вăл халех килес çук-ха, кӳршĕсем патне çеç кайнă пулсан апат хăварсах аппаланмĕччĕ.

Сергейваскасах тăхăнкаларĕ те, сĕтел çинчи апата кăп-кап хыпкаласа, Олеш патне тухса чупрĕ. Тусĕ те килте пĕччен иккен, вĕсен кукамăшĕ Сергей асламăшĕнчен çамрăкрах, ĕç патне те тухкалать, çавăнпа пĕччен пулма хăнăхнă Олеш килти ĕçсене те хăех пуçтарать.

— Васкарах эс, Олеш,— тăпăртатрĕ Сергей пĕр вырăнта.— Хĕвел ăçта çитрĕ, куратăн-и? Кăнтăрлаччен те çитейместпĕр капла эпир вăрмана, ĕç-пуçне кайран пуçтаратăн. Савăтне пысăкраххине ил, пĕлетĕн-и, мĕн чухлĕ çырла эпĕ сана илсе каякан вырăнта! Тĕлĕнсе кайăн акă! Шултра тата. Çĕр çырли те пур унта.

Пĕр сехет пек иртсен, икĕ тус вăрманалла утрĕç. Нумаях утмалла мар-ха, çухрăм çурă пек çеç, çапах калаçмалăх пур ĕнтĕ. Ăçта кăна çитмерĕç пуль ĕмĕчĕсемпе хăйсем! Çырла пуçтаракан машина та шутласа кăларчĕç, пушмак тĕпне тĕлĕнмелле кнопка та лартса пăхрĕç, пус та çав кнопкăна — яра пар, темиçе минутранах вăрмана çитетĕн. Çук çав, Олешпа Сергей иккĕшĕ çеç пулсан та, нихăçан та кичем мар вĕсене.

Çуллахи вăрман янăраса кăна тăрать, тĕрлĕ кайăк сасси темле асамлă оркестр вылянă пек илтĕнет.

— Олеш, çынсем çырла татса тултарса килĕсене кайма пуçтарăннă пулĕ, эпир пур, халь кăна сĕтĕрĕнсе çитрĕмĕр. Эпĕ ку вырăна никам та пĕлмест пулĕ тесеччĕ, кунта вара кăткă пекех халăх, мĕн чухлĕ килсе тулнă,— мăкăртатрĕ Сергей уçланкă патне çитсен.— Итле-ха,— терĕ сасартăк куçĕсене çиçтерк келесе.— Атя, пĕр ĕç тăватпăр. Вăт шухăшласа туп-

рăм-тăк тупрăм! Малалла ку вырăн пирĕн кăна пултăр. Урăх никам та, нихçан та ку уçланкăна килсе ан тухтăр. Хамăр хуçа пулатпăр кунта. Эсĕ тата эпĕ, атя! Килĕшетĕн-и?

— Мĕнле вара,— кăсăкланса ыйтрĕ Олеш.— Йĕплĕ пралук карса тухасшăн мар пулĕ те эс? Е хăмасем çине: «Ку — пирĕн уçланкă, никама та кĕме юрамасть»,— тесе çырса пĕтĕм енне çакса тухасшăн-и? Вăт ухмах, ун чухлĕ пралукĕ те, хăми те тупăнас çук. Тата кам итлĕ пире? Вăрманĕ пирĕн çеç мар-çке вăл, халăхăн. Пăх-ха ăна, вăрман патши пулас килсе кайнă Сергейĕн. Тӳшек илсе килсе памалла мар-и тата сана уçланкă варрине? Пуçу çине юман çулçинчен пуç кăшăлĕ. Чаплă пулать, е? Вĕренес çук, ĕçлес çук, лар кăна мăкланса кайиччен.

— Ытлашши ан калаç-ха эс, чăнласах калатăп эпĕ. Мĕн пулать те мĕн килет, тытăнатăп ĕçе, эсĕ вара, хăравçă хăрăм çинĕ тенешкел, пуçтар çырлуна,— кăшкăрса пăрахрĕ Сергей кӳренчĕклĕн.—Хăрăм тенĕрен... Олеш, туп-ха çавăнта кăвайт çунтарнă вырăн, вăн, леререх пурччĕ пулас,— терĕ Сергей сылтăмалла тĕллесе. Олеш ним ăнланмасăрах, тусĕ ыйтнипе, хура вутпуççисем илсе пычĕ.

Сергей хăпăл-хапăл çиелти кĕпи-йĕмне хыврĕ те Олеша тăсса пачĕ.

— Тыт,— терĕ вăл.— Манран ан юл, анчах ан курăн, асту, çав тĕмĕсем айккипе пыр.

Хăй васкаса кăмрăкпа сăрланма тапратрĕ, паллама та çук халь ăна.

— Упăте пекех эс капла,— терĕ Олеш кулкаласа.

— Нимĕнле упăте те мар, эпĕ — шуйттан çури. Илтрĕн-и, вăрманта пурăнакан арçури, урăхла каласан.

— Эй, арçури, кун пек сăрланса мана хăратасшăн-и вара эсĕ,— ыйтрĕ Олеш, тусне пӳрнипе тĕллесе.— Эпĕ пĕрремĕш класа кайиччен арçурисенчен хăрама пăрахнă.

— Мĕн тăватăп эпĕ санпа, хăратмаллисем ман сансăр пуçнех пур,— тесе хучĕ Сергей куçне чеен хĕссе, хăйĕн урисене, хырăмне лайăхрах сăрланă май.— Куратăн-и, çавсене хăрататăп, айван ача-пăча анчах унта, ваттисем çук. Уçăмлăрах каласан, паянтан ку уçланкă пирĕн кăна пулать, кунта «арçури» курнине ыранах пĕтĕм ял пĕлĕ, ун хыççăн никам та килме хăяс çук.

— Асту,— иккĕленчĕ Олеш.— Ĕненсех ларать ĕнтĕ ял халăхĕ сан юмахна. Ĕлĕкхи мар-çке халь...

Олеш хăй шухăшне каласа та пĕтереймерĕ, уçланкă тепĕр енче ача-пăча сассисем илтĕнсе кайсанах, Сергей ăна, хăй çумне туртса илсе, çĕр çумне лăпчăнтарчĕ.

— Пăх-ха, Олеш,— терĕ вăл тусне çурăмĕнчен паклаттарса.— Бидонсемпех килнĕ вĕсем, кружкăсем çине тултараççĕ те бидонĕ çине кайса яраççĕ. Тимлĕрех пул, бидонĕсене ăçтарах лартнине асăрха. Эпĕ сиксе тухатăп, эсĕ çав вăхăтра... Ăнлантăн-и?— ыйтрĕ Сергей Олеш çине пăхса, юлашки сăмахне калама хăяймасăр. Хăй çав вăхăтрах сиксе тăчĕ те, тем çухăрашкаласа, арăш-пирĕш сиккелесе, уçланкăна тухма хатĕрленнĕ çынсене хирĕç чупрĕ. Качака пек те çухăрчĕ вăл, ача пек те макăрчĕ, чикĕлмакăль турĕ, тăват уран упаленчĕ, урлă-пирлĕ сиккелерĕ. Лешсем, кăна пачах кĕтменскерсем, тĕрлĕ еннелле тарма пикенчĕç. Вăрман ачасем çуйхашнă сасăпа тулса ларчĕ, каялла çаврăнса пăхмасăр, кам ăçталла пĕлет, çавăнталла чупрĕç. Олеш та, хăйĕн мĕн тумаллине тавçăрса, бидонсем патнелле ыткăнчĕ.

Тепĕр темиçе минутран Сергейпе Олеш бидон йăтса чăтлăхалла чăмрĕç. Малтанлăха ним шухăшлама та пĕлмерĕç-ха вĕсем, такамран каçса кайса кулса, ывçи-ывçипе çырла хыпрĕç.

— Сергей, ку бидонне ăçта хуратпăр вара эпир, кун чухлĕ çырла çисе те ярас çук, хамăр савăта та

кĕмест,— пĕлтерчĕ Олеш тепĕртакран тусĕ çăвăнкаланине сăнаса тăнă май.— Пăрахса хăварма та шел, пĕрер çырлан пуçтарнă çынсем... Кун пек тумалла марччĕ пулĕ. Тата... Ман хамăн та çырла пуçтарас килет. Килĕшмест мана кун пек туни.

Сергей нимĕн те шарламарĕ-ха, хăйне çĕнтерӳçĕ пек тыткаласа, бидонри çырлана пуса-пуса, тăрăшсах хăйĕн савăтне тултарчĕ.

— Тупнă шухăшламалли,— терĕ вăл куларах.— Бидонне ăçта хумаллине пĕлмест, кайнă та хунă çав тĕмĕсем хыçне, кама кирлĕ — килсе илет, кирлĕ мар пулсан — хăйсен кăмăлĕ. Эсĕ вара халиччен çырла татса курман ача пек каласан. Татасах килсен — кай та тат. Мана кирлĕ мар, мăй таранах çирĕм, киле илсе каймалăх та пур. Пыран пулсан, атя киле, пымасан — юл,— терĕ Олеша хăйпе пĕрле пырасса шансах.

Олешăн, чăн та, вăрман варринче пĕччен юлас килмерĕ, темшĕн килĕшмерĕ ăна паянхи вăрман. Сивлек вăл, çӳçентерет. Кашни йывăç, кашни тунката хăйне такăнтарассăн туйăнчĕ. Вара вăл Сергее ним каламасăрах, бидон çинчен те, хăйĕн савăчĕ çинчен те маннă пек пулса, çул çине тухрĕ те васкасах ялалла утрĕ.

Сергей яла çитнĕ çĕре кун каç енне сулăннă: «Çапах та кĕтӳ кĕртмен пулас, выльăх-чĕрлĕх макăрни илтĕнмест, аннесем те ĕçрен килме ĕлкĕреймен апла»,— шухăшларĕ вăл. Вăт асламăшĕ... Асламăшĕ килтех ĕнтĕ, мăнукĕ таçта çухалса çӳренине лешсене килнĕ-килменех каласа парать акă. Ай-ай, лекет те вара Сергее. Ăна килти ĕçсенче асламăшне пулăштарттарасшăн-çке амăшĕ. Вăл пур, юри тенĕ пекех тата, савăтри çырлине те çисе янă. Ăçта пулнă темелле халь?

Çавăн пек шухăшлакаласа хапха умне çитсе тăнăччĕ кăна Сергей, ăна хирĕç амăшĕ вирхĕнсе тухрĕ.

— Сергей, эс хытăрах чупан, Анаткасран тухтă-

ра чӗнсе кил-ха, асаннӳ аптранӑ, татах чӗре ӗнтӗ,— терӗ те васкаса пӳрте кӗрсе ҫухалчӗ.

Тем самантран Сергейпе тухтӑр килсе те кӗчӗҫ. Юрать ҫулӗ инҫе мар.

— Ывӑнтӑм ҫав паян, вӑрмана кайнӑччӗ те,— терӗ асламӑшӗ, уколсем тунӑ хыҫҫӑн кӑштах ҫӑмӑлланса.— Ара, хамшӑн мар, хамшӑн пулсан каясах ҫукчӗ, ҫав Ҫинук тӑхлач пирки мар-и, тахҫанах ҫырла ҫиес килет, тет. Хӑй уткалаймасть, мӗн тӑвас тен, аса килнӗ те ӗнтӗ ӑна ҫырла, ҫиесси килет пуль ҫав. Ачи-пӑчи ҫук. Ҫавна валли кӑштах пухса килес тенӗччӗ те, хампа пӗрле вӗтӗр-шакӑрсене ертсе кайрӑм. Такам пуҫтах ачи пулчӗ, упӑте пек сӑрланса лартнӑскер, сиксе тухрӗ те... Вӗтӗр-шакӑра нумай кирлӗ-и, сехрисем хӑпрӗҫ, хӑрарӗҫ пулас. Кайран аранаран тупса пӗтертӗм вӗт ачасене. Хӑраса ӳкнӗ те вӗсем ӑҫталла куҫ курать ҫавӑнталла чупнӑ. Ҫук вӗт, татнӑ ҫырлана та пӑрахса хӑвартӑмӑр,— пӑшӑлтатрӗ асламӑшӗ мӑнукне пуҫӗнчен шӑлнӑ май.

Сергей хӑйӗн пичӗ пӗҫерме тытӑннине туйса илчӗ. Апла асанне пулнӑ вӗсен хушшинче, ун ҫырлине вӑрланӑ, Ҫинук кинемей валли татнӑ ҫырлана... Халлӗхе вӑл нимӗн те шарламарӗ-ха, ыран, акӑ, асламӑшӗ сывалсан, йӑлтах каласа парӗ ӑна. Тӗпӗ-йӗрӗпех. Пӗтӗмпех. Пуринчен те каҫару ыйтӗҫ, хӑраса ӳкнӗ ачасенчен те, асламӑшӗнчен те. Мӗн туса хучӗҫ-ха вӗсем? Ҫук, ыран ирхине ирех Олешпа вӑрмана чупмалла. Нумай ҫырла татмалла вӗсен ыран, питӗ нумай, Ҫинук кинемей валли те, ыттисем валли те. Хӑйне ҫакӑн пек шухӑшсемпе лӑплантарасшӑн пулчӗ пулин те, пусӑрӑнчӑк кӑмӑлӗ иртсе каймарӗ Сергейӗн.

## Й ӑ м р а

Икӗ ҫул юппинчи йӑмрана уйрӑмах килӗштерет Нина. Кам лартнӑ-ши ӑна? Лаша-машина ҫӳремест

вăл çулпа, çавăнпа никам та тĕкĕнмест ăна. Мĕнле аван! Нинăна çеç те мар, пурне те килĕшет-ха вăл. Хурама хăш чухне уйра пĕччен ларкалать, ытти йывăççем те, вăт йăмра... Пĕччене унта вăл; урăх пĕр йывăç та çук, шывĕ те сахалтарах пулĕ, çавăнпа ниепле те лайăххăн вăй илеймест ĕнтĕ вăл. Шухăшлать те хăш чухне тĕлĕнет Нина: тен, никам та лартман ăна, тен, вăл ăнсăртран вăрмантан тухнă, йĕри-тавра хăй пеккисем сахаллине курса, яла каймасăр пуçтарăннă. Ытти йăмрасем патне. Ял йывăçĕçке-ха вăл йăмра, ял илемĕ. Вара, çурма çула çитсен, вăйĕ пĕтнипе яланлăхах çакăнта юлнă. Ун пек чух питĕ шел пулса каять йăмрана.

— Çук пулĕ,— шухăшлать çав вăхăтрах Нина,— ялтан кайнă вăл. Тем тесен те ялтанах кайнă, уй варрине, çул юппине, юри хĕллехи вăхăтра çултан пăрăнса аташса çӳрекенсене çул кăтартма, çулла хĕртсе хĕвел пăхнă чухне ăшăпа аптранă çынна кăшт сулхăн пама, кĕрлĕ-çурлă — сивĕ çумăртан хӳтĕлеме... Юри кайнă, хăйне йывăр пуласса пĕлсе тăрсах, çул çӳрекенсемшĕн, çынсемшĕн.

Кун пек шухăшпа Нинăн вара пурăнас килсе каять, ырă-ырă тăвас килет çынсене. Çумри юлташсемшĕн, пĕрле вĕренекенсемшĕн, вĕрентекенсемшĕн, ял халăхĕшĕн пурăнас килет.

— Йăмра пек, çав çул юппинче ларакан йăмра пек пулмалла,— калаçать вăл хăш чухне хăйпе хăех шкула кайнă-килнĕ чухне. Шăп çав йăмра çумĕнчен иртсе каймалла та-ха.

Виçĕ ялтан пуçтарăнаççĕ ачасем Нина çӳрекен шкула. Икĕ ял ачисем вара шкула кайнă чухне çав йăмра патĕнче тĕл пулаççĕ, шкултан килнĕ чухне çавăнтах уйрăлаççĕ.

Пĕррехинче Нина ялтан пĕччене тухрĕ те хăнăхнă çулпа хăйсенчен пилĕк çухрăмра ларакан ялти шкулалла утрĕ. Çурхи çанталăк чуна темле канăçсăрлăх, çав вăхăтрах хаваслăх кӳрет. Кашни че-

чек умне пӗшкӗнсе ларса пӗр-ик сӑмах та пулин каласса илес килнӗ пек. Пӗтӗм тӗнче калаҫать тейӗн. Кашни ӳсентӑранӗ, кашни юханшывӗ, хур-кӑвакалӗ, кайӑкӗ, йывӑҫ ҫинчи кашни турат хӑйсене ҫак пысӑк тӗнчен уйрӑлми пайӗ пулнӑ пек туяҫҫӗ. Хӑйсем те пурне те кирлӗ пек, хӑйсене те такам та кирлӗ пек. Ҫырмари шӑнкӑртатса юхакан шыв патне ҫитсен, вӑл пӗр хушӑ чарӑнса тӑчӗ. Ытла тӗлӗнмеллеҫке-ха, шыври кашни вӗт чул катӑкӗ те ҫут хӗвелпе пытанмалла вылять, ҫуталса илет те — ҫухалать, ҫуталса илет те — ҫухалать. Леш ырать вара, шырать... Пӗр ҫӗре пырса пӑхать, тепӗр ҫӗре. Шыв шӑнкӑтартнӑ май ҫав хитре та йӑлтӑркка вӗт чулсем ахӑлтатса кулнӑн туйӑнаҫҫӗ.

Ҫурхи ҫил те хӑйне май вара. Хӗллехи сивӗ ҫанталӑксем хыҫҫӑн, йӑпӑлти ҫын пек, ачашшӑн та асӑрханса сӗртӗнет, ним ыйтмасӑр-тумасӑр силлес кӑмӑлӗ те ҫук, хӑй ҫав вӑхӑтрах хушӑран-хушӑ хӑнӑхнӑ йӑлипе шухланса та илет, ҫавӑнтах ӗлӗкхи вӑхӑт иртсе кайнине сиссе лӑпланать.

Чуна уҫса ямалла ҫӳлте тӑри тӑрӑлтатать. Ытармалла мар сасси, кӗвӗллӗн-кӗвӗллӗн, татӑкӑн-татӑкӑн юрлать вӑл. Пурне те хӑй сассине илттересшӗн, пурне те хӑй савӑнӑҫне парасшӑн пек ҫӳле хӑпарса каять, унтан, такам илтмесӗр юласран шикленсе-ши, хӑвӑртрах аялалла вирхӗнет.

— Тем тесен те,— шухӑшлать Нина,— ҫакӑн пек кайӑк савӑнӑҫ кӑна кӳме пултарать. Савӑнӑҫ юрри вӑл, ҫуркунне юрри.

— Килӗр-килӗр,— тет тӑри,— савӑнӑҫ парап, илӗр, илӗр, ахаль калать теетӗр-и, суя сӑмах теетӗр-и?

«Ҫук, ӗненетӗп, телейлӗ эпӗ!» — кӑшкӑрас килсе каять Нинӑн ӑна хирӗҫ. Ҫавӑнтах, хӑнӑхнӑ йӑлипе:

— Тӑр-тӑри, тӑр-тӑри, кӑҫал тырпул ӑнса пулсан — вӑрр вӗҫсе кай, япӑх пулсан — лап! ан,— тесе кӑшкӑрса ярать. Унтах хӑй мӗн каланинчен хӑй

хăраса ӳкнĕ пек пулса, тата хытăрах: — Çук, тăри, яланах вĕç, нихăçан та ан ан, яланах çӳлте пул, паян та, ыран та, тепĕр çул та, çĕр çултан та, пин çултан та! — кăшкăрать вăл.

— Мĕн, паян та кайăксемпе калаçатăн-ха апла эсĕ,—илтĕнчĕ сасартăк хыçра. Çаврăнса пăхрĕ те Нина — ним тума аптраса тăчĕ. Тăвата-пилĕк арçын ача, кашнин аллинче — çул юппинче ларакан йăмра турачĕсем.

— Мĕн туса хутăр эсир, мĕншĕн ун пек тăватăр?! — ыйтрĕ Нина Олег умне пырса.

— Ан хăра, мĕн чухлĕ касатăн йăмрана, çавăн чухлĕ ытларах туратланать,— татса хучĕ леш ним пулман пек.

— Чуп, каялла кайса пăх ĕненмесен,— йĕкĕлтешрĕç ыттисем те,— татах туратланса кайнă.

Вара савăнăçлăн кулкаласа малалла утса кайрĕç.

Пĕр çухрăм пек юлсан, Нина хăлхине темĕнле кĕвĕ илтĕнсе кайрĕ; инçех те мар, лапамра, Олег ларать.

— Кур-ха, Нина, мĕнле чаплă шăхлич турăм сан йăмрунтан, сасси те лайăх,— пĕлтерчĕ вăл Нинăна.

— Çак кĕвве илтнĕ-и? — ыйтрĕ Олег кăшт тăрсан.

— Илтнĕ,— терĕ Нина шăппăн.

— Пулма пултараймасть, эпĕ ăна халь кăна шухăшласа кăлартăм-çке,— тĕлĕнчĕ Олег.

— Йăмраран илтрĕм,— хуравларĕ Нина,— халь эпĕ ун умĕнчен иртсе кайнă чухне шăпах çак юрра юрлатчĕ вăл, çурхи кунпа хавасланса, ĕмĕтленсе юрлатчĕ. Ытарма çук илемлĕ тĕнчене, вăштăр çиле, çут хĕвеле мухтатчĕ. Савăнăçлăн, хаваслăн юрлатчĕ, часах эпĕ юратнă шкул ачисем килессĕ тетчĕ, сире кĕтетчĕ. Эсир...

Олег пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕ. «Енчен чăнах та çавăн пек пулсан?»

Кăшт вăхăт иртсен, хуллен кăна тунсăхлă кĕвĕ янраса кайрĕ.

— Ку мĕнле? — ыйтрĕ Олег татах.

— Сана ӳпкелет вăл,— хуравларĕ Нина пĕр тăхтамасăр.— Сире лайăххисĕр пуçне эпĕ нимĕн те туман, тет, çил-тăманра çул кăтартнă, шăрăхра сулхăн панă, çумăрта — хамăн туратсемпе хӳтлĕх кӳнĕ, тет. Ырă сунса кĕтсе илнĕ, ырă сунса ăсатнă, тет, иртнĕ куншăн савăннă, çитес куна мухтанă, тет.

— Малалла? — ыйтрĕ Олег, Нина калаçма чарăнсан.

— Малалла пĕлместĕп, вĕçлеймерĕ пулас юррине, сĕткенĕ типет,— ассăн сывларĕ хĕрача.

— Итле-ха,— калаçрĕ Олег,— кĕркунне нумай-нумай йывăç лартса хăварăпăр, ăхă? Ан хăра, Нина, ку йăмра чĕрĕлет, нихăçан та, никама та хуçтармастăп урăх. Куратăн акă. Тепĕр çул ун çумĕнче татах та йывăçсем пулчĕç. Вара... вара эсĕ мана ун чухне вĕсем мĕнле юрă юрланине каласа парăн-и?

— Каласа паратăп,— пăшăлтатрĕ Нина, Олега куçран пăхса.— Эх, итлесчĕ санăн чĕрĕ йывăçсем мĕнле юрланине. Пĕрре илтсен — нихăçан та манаймăн. Ăнланма анчах пĕлмелле вĕсене.

## „К а ч а к а с е м“

Пирĕн ялта вăтăр килтен мала мар, выльăхсем те сахал, хăшпĕрисен пачах çук, çавăнпа çуллахи вăхăтра халăх кĕтӳç тытса аппаланмасть. Черетпе çӳретпĕр кĕтӳ кĕтме. Икĕ пуçшăн — пĕр кун. Эпир вара, ачасем, савăнăçлăрах пултăр тесе, икшерĕн каятпăр. Пирĕн, юнашар пурăннă пирки, Микула пиччесен Толикĕпе кайма тивет. Пилĕк кун каятпăр та — черет татăлать вара.

Кĕтӳ çӳретме килĕшет пире. Тăсăлса выртатăн та çерем çине — хăть те мĕн ту унта, юмах яратăн-и е



26000 чув.
Чуваш... республ... БИБЛИО... им. М. ...

пĕр-пĕр интереслĕ кĕнеке вулатăн. Эпĕ вара чăпăрккапа шартлаттарма юрататăп, ун та хăйĕн йĕрки пур иккен, çĕр çумĕпе тăсса яратăн та чăшт! туртса илетĕн. Аçа çапнă пек янăраса каять. Ман пек ăста шартлаттаракан ялĕпе те урăх çук нулĕ.

Паян та, ак, эпĕ çапла кăнтăрлаччenex чăпăрккапа «вылякаласа» çӳрерĕм, каçалапа вара Анюк аппасен качаки пĕтĕм канлĕхе пăсса хучĕ. Ир çинче лайăхах çӳрерĕ вăл, çĕрĕпе выçăхса çитнĕскер, пуçне çĕклемесĕрех симĕс курăк кăчăртаттарчĕ, кăнтăр иртсен вара, кăштах выртса каннă хыççăн,— ай-ай-ай. Чăпăркка та «лектерсе» пăхрăм. Ăçта кăна çитмерĕ вăл çак çур кун хушшинче, хăй çеç те мар тата, ыттисене те ертсе каять. Тем тусан та чарма çук. Çĕр çурăласла кăшкăрсан та, хăнк та тумасть.

«Çук,— шухăшлатпăр Толикпе иксĕмĕр.— Ыран кăштах паянхинчен ăслăрах пулас пулать. Кун пек кашни кун чупас пулсан, вилмелле. Мĕншĕн вара пирĕн качака хыççăн вирхĕнсе çӳрес, эпир çынсем-çке, вăл — выльăх. Ун хăйĕнех пире итлемелле. Мĕн тăвас?» Шухăшларăмăр-шухăшларăмăр та — кăнтăрлаччен кăкарса хурас терĕмĕр, тăтăр ыттисем мĕнле çинине пăхса, кĕвĕçтĕр. Кайран, каçкӳлĕм, салтса ярас, вара вăл ниçтах та каймĕ, каçченех çисе çӳрĕ.

Мĕнле шутланă — çавăн пек тунă. Çур кун качака кăкарăнса тăчĕ. Малтанах кантрине вăрăм турăмăр, шуйттан, татса тарчĕ вĕт. Тарăхнă енне кĕске кантрапа кăкартăмăр. Пуçне те пĕкеймест качака. Ун вырăнне салтса янă хыççăн лайăхах çӳрерĕ вăл, пĕр чарăнмасăр çирĕ, хушăран çеç пирĕн çине сиввĕнреххĕн пăхса илкелерĕ. Лăпкăнах пурăнтăмăр çапла иккĕмĕш кун.

Тепĕр кунне те качакана кăкарса хума Толик кантрине кăларнăччĕ кăна, Анюк аппа çĕмĕрттерсе çитрĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку? — тет.— Халичченхипе

танлаштарсан, качака сĕт çуррине те памарĕ. Мĕн çитеретĕр эсир, ăçта çӳретĕр?

Ним калама аптрарăм.

— Чиперех-çке, ыттисемпе пĕрлех,— мăкăртатрăм хуллен.

— Пăрах чăпăрккуна, чипер тăракан выльăхсене мĕн хăмсаркаласа тăран! — терĕ те Анюк аппа, палт çаврăнса, ялалла утрĕ.

Çакăн хыççăн качака еннелле пăхас килми пулчĕ. Ăна мĕн, кирлĕ те мар эпир пăхни, вăл хăй хуçа кунта. Çавăрать те каять выльăхсене хăй шутланă еннелле, кайран чуп ун хыççăн. Айккинелле тапса сикет ку — ыттисем хыçалтан. Чăн-чăн хуçах ĕнтĕ. Ара, кĕтӳри пур сурăх-качаки те ăна итлет-çке, вĕсем çеç-и-ха тата, эпир те, кĕтӳçĕсем. Вăл — хуçи, эпир — тарçисем. Çук, кун пек мăшкăла чăтма çуках.

— Ыран татах кăкарса хуратпăр,— терĕм Толике çирĕппĕн.

Ыран... Калама çеç çăмăл пулчĕ çав. Лайăх кăтартрĕ вăл пире типшар тепĕр кун. Кĕтĕве хамăр хăваласа пынă чух чиперех çӳретчĕ-ха качака, ыттисем хушшинчехчĕ. Толик ăна чăпăркка вĕçĕпе те лектерсе пăхрĕ, кайран — таçта кайса кĕчĕ мур выльăхĕ.

— Ну, лекрĕмĕр,— тетпĕр,— мĕн тейĕ халь пире Анюк аппа, вăл çеç пулсан юринччĕ, кун çинчен ыран ирхинех пĕтĕм ял пĕлĕ,— выляса çӳреççĕ, кĕтĕве пăхмаççĕ тейĕç тата.

Анюк аппан чĕлхине пĕлетпĕр эпир, киле пырса та вăрçĕ вăл, вара атте-аннерен лекесси паллах.

— Çук,— тетĕп Толике,— кун пек юрамасть, тупмаллах,— тетĕп,— качакана.

Ăна кĕтӳ патне хăвартăм та хам çырма тăрăх чупрăм. «Хамăр килнĕ çул çинчех пуль тем тесен те, айккинелле çеç пăрăнса юлнă»,— ĕнентересшĕн хама хам.

Çук. Ниçта та çук качака. Ăçта кăна çитмерĕм пулĕ, ялта çитмен пахча юлмарĕ, мĕскер унта пахча, ял вĕçĕнчи пăрахăçа тухнă тараса патне те кайса килтĕм, ăçтан пĕлен, тен, çĕрĕ йăтăнса аннă та, ку, ун çывăхĕнче çӳрекенскер, тӳрех — тарасана. Çапах та, унта çуккине курсан, чун лăштах пулчĕ. Çывăхри вăрмана чупса кайса килтĕм. Хăрамаллипех хăрарăм ĕнтĕ. Ахаль те качаки ыр качака мар та вăл, шăтăрнак çинчен шăтăрнак çине сикекенскер, ăçта та пулсан тирĕнсе ларма пултарнă. Хырăмĕпе пĕр-пĕр шĕвĕр патак çине тирĕнĕ те...

Каçалапа аран-аран кĕтӳ патне çаврăнса çитрĕм. Хам çумра йĕп чикмелĕх тип вырăн çук, хăть те кĕпесене хывса пăр, аякран чикен чикет. Толик патне çитрĕм те ун умне тăсăлса выртрăм. Халĕ çав çухалнă качакапа пĕрлех Толике те курас килмерĕ, пĕр канми чупса çӳретĕп эпĕ кунĕпе, вăл пур — хăнк та çук.

— Халĕ эс чуп,— теме кăна çăвара уçнăччĕ эпĕ, инçех те мар, хамран вунă-вунпилĕк утăмра кăна, качака çӳре парать. «Кăмăрт-кăмăрт» тутарать вăл çемçе курăка сухалне выляткаланă май. Унччен те пулмарĕ, Толикĕ сиксе ӳкрĕ ман çине:

— Мĕн туса çӳрерĕн ку таранччен, мĕн айăпа кĕнĕ эпĕ сан умăнта кĕтĕве пĕччен пăхма?

— Качака? — персе ятăм ним калама аптранă енне.

— Мĕн качака, эсĕ каясса çеç кĕтсе тăнă вăл, куçран çухалсанах — çĕмĕрттерсе те çитрĕ. Пуçларĕ вара хăй ĕçне. Унталла та кунталла кăна çавăрттарать кĕтĕве. Куçĕ те калча çинче анчах ун. Пĕтĕм вăй пĕтрĕ.

Вара... Пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр те Толикпе, пур-çук вăйпа кулса ятăмăр. Апла паян та эпирех «качакасем» пултăмăр, вăл — кĕтӳçĕ. Çавăн пекех çав, кунĕпе сывлăш çавăрмасăр унран ытларах чупрăмăр пулать те. Юрать кулма пĕлмест качаки,

унсăрăн каçса кайса кулĕччĕ. Тепĕр тесен, ку качакаран тем те кĕтме пулать, ахăлтатса та ярĕ вăл. Çакăн пек чееленме пултарчĕ те.

Толикпе иксĕмĕр те яла аран сĕнкĕлтетсе çитрĕмĕр. Апат таврашĕ те кирлĕ мар, тӳрех — вырăн çине. «Тата икĕ кун-çке»,— вĕлтлетрĕ пуçра çывăрса кайиччен юлашки шухăш.

— Мĕн тумалла санпа? — шухăшлатпăр Толикпе иксĕмĕр, качака çине пăхса, пиллĕкмĕш кунне.— Кăнтăрлаччен кăкарса тăратас — сĕт сахал паран, Анюк аппа татах вăрçма килет, кăкарас мар — «качака» пулас килмест.

— Пĕлтĕм! — терĕ сасартăк манăн тус.— Пулин, çӳретĕр. Хăçан та пулсан, çисе тăрансан, хăех каялла килет, кĕтĕве кăна лайăхрах сыхлас, ун хыççăн кайма ан пултартăр. Тен, вăл паян та ĕнерхи пек чееленесшĕн. Çук, ку хутĕнче ăслăрах пулатпăр.

— Чăнах та,— тетĕп эпĕ те,— мĕн ун хыççăн чупса çӳремелли пур, ĕнер те аякра пулман-çке вăл, эпĕ пăрăнасса кăна кĕтсе тăнă.

Хайхи, кĕтӳ кĕтме меллĕрех пултăр тесе, выльăхсене лапамалла антартăмăр. Пĕр енче — юханшыв, унта сыхлама та кирлĕ мар, тепĕр енче вăрман пуçланать, хĕррипе карта тытса çавăрнă.

Апачĕ енчен сахалтарах та ĕнтĕ, юрĕ-çке, ун вырăнне хамăра канлĕрех пулать, сыхламалли те ик енчен кăна. «Каятăн пулсан — каях» тенĕн пăхса илтĕм те качака çине, тăсăлса выртрăм, çапах та чăпăрккана алăран пăрахмарăм-ха... «Кайсан мĕнле те, анчах каймасан тата лайăх-çке, ăçтан шанан ăна, таçта çитсе тухĕ вăл,— çакăн пек шухăшлама ĕлкĕртĕм кăна, вăшт! тапса сикрĕ ман умран качака.— Таратăн пулать,— вĕлтлетрĕ çĕнĕ шухăш,— атя каях, кĕтсе тăр унта хăв хыççăн чупасса».

— Шăвăнчĕ! — кăшкăртăм Толике, вăл та, манпа килĕшнĕ пек пулса, алне çеç сулчĕ.

Пĕр сехет çурă пек иртрĕ-и, иртмерĕ-и, Анюк

аппа качакине çавăтса та пычĕ. Вĕçтерет кăна сăмахсене!

— Мĕн туса ларатăр эсир кунта, çывăратăр-и е хăвăрăн сурăхăрсене кăна пăхатăр-и? Ирхине чиперех кĕтĕве пырса ятăм качакана, çынсем те курчĕç. Ма тартатăр ман качакана. Кĕтӳрен çывăрса юлнă çын пек намăсланса килтĕм. Ку вырăнсăр пуçне урăх вырăн тупаймарăр-и, курмастăр-и-мĕн, курăкĕ типсе-сарăхсах кайнă! — кăшкăрать Анюк аппа. Эй, мĕн кăна каламарĕ пуль унта. Аннесене каласа парассипе хăратать тата. —Никамран, никамран тарса курман ман качака, пăшăлтатса каланине те итлет,— тесе хучĕ юлашкинчен.

— Итлет, кĕтсех тăр,— хирĕçлерĕ пирĕн пата çывхаракан Толя.

Тарăхса кайнă Анюк аппа качаки умне пĕшкĕнчĕ те хуллен кăна:

— Юрать, кăштах ăсатса яр та, эппин, каялла кил,— терĕ,— ĕçе каймалла ман, санпа тăма вăхăт çук.— Хăй çаврăнчĕ те ялалла утрĕ. Качаки те хыçалтан кайрĕ. Лапамран хăпарса çитсен, Анюк аппа татах качакине тем каларĕ, лешĕ, ăна итленĕ пекех, каялла çаврăнчĕ.

— Çук,— тетĕп Толике,— кунта тем ăнланмалла мар япала пур: е качаки çын чĕлхине ăнланать, е Анюк аппа вĕсем пек калаçма пĕлет. Ахальтен-и вăл ĕмĕрĕпех фермăра ĕçленĕ. Вăт качаки те ăна юри элеклеме кайнă ĕнтĕ килне. Чăнах, çыннине кура выльăхĕ теççĕ, иккĕшĕ те пĕрех. Хăй кĕтӳ кĕтнĕ чухне ун пеккине кăтартмасть пулĕ те вăл ăна. Пирĕн вырăнта пулсан, хăй те тарăхса çитмелле.

— Коля,— терĕ сасартăк Толик,— эсĕ асăрхарăн-и, питĕ лăпкăн калаçрĕ вăл качакипе, тен, ку хăйне кăшкăрнине юратмасть, астăватăн-и, эпир ăна çапкаласа та илтĕмĕр; хăйне, ахалех чипер пыраканскере, «лектернĕшĕн» кӳренмен-ши вăл? Аса ил, Ахваниç пиччесен пахчине кĕнĕ тесе юри каланăшăн

мӗнле тарӑхса кайнӑччӗ эсӗ? Кайран хӑвӑнтан касару ыйтичченех кӳренсе ҫӳрерӗн-ҫке.

— Эпӗ ҫын-ҫке, вӑл — качака, мӗн шухӑшлама пултартӑр вӑл,— терӗм аптранӑ енне. Унтан: юрӗ, лайӑхрах «калаҫса» пӑхӑпӑр унпа, кӑмӑллӑрах, тен, чӑнах та лӑпланӗ,— тесе хутӑм. Хам ҫав вӑхӑтра качакана пырса ачашлакаласа илтӗм.

— Айтӑр симӗсрех курӑк ҫине, кунта, чӑнах та, ним ҫимелли те ҫук,— терӗ Толик те, сассине улӑштарса.

Тепӗртакран кӗтӗве унччен хи вырӑна илсе кайрӑмӑр. Ҫухӑрашмарӑмӑр хамӑр, чӑпӑрккасемпе те шартлаттармарӑмӑр. Качаки те, пӗлнӗ пекех, пирӗн шухӑш-кӑмӑла ӑнланнӑн, питӗ йӗркеллӗ тытрӗ хӑйне. Кунӗпе ҫӳрерӗмӗр Толикпе иксӗмӗр ҫав кунне, анчах малтанхи пек ывӑнмарӑмӑр.

Юлашки кун вара качака пире тӗлӗнтерсех пӑрахрӗ. Кӑнтӑр вӑхӑтӗнче кӗтӗве выртттартӑмӑр та калаҫкаласа ларатӑмӑр ҫапла Толикпе, унччен те пулмарӗ, таҫти шӑтӑкран Филипп пиччесен йытти сиксе тухрӗ; выртакан сурӑхсем тӗрлӗ еннелле сиксе ӳкрӗҫ. Эпир ҫеҫ те мар, пысӑккисем те хӑраҫҫӗ вӗсен йыттинчен. Пысӑкскер вӑл, ҫӑмламасскер, питӗ усал тата. Урнӑ тесе те калаҫкалатчӗҫ-ха ялта ун пирки. Эпир Толикпе иксӗмӗр те сиксе тӑтӑмӑр, ара, кӗтӳҫӗсем-ҫке, пӗр-пӗр сурӑхне тытса ҫурсан ырриех пулас ҫук. Эпир вырӑнтан хускалнине курсан, йытӑ харлаткаласа пирӗн еннелле талпӑнчӗ. Сехресем хӑпсах тухрӗҫ. Сасартӑк пирӗн ума Анюк аппасен качаки патлаттарса ҫитсе тӑчӗ. Чупса та мар, васкамасӑр, хуллен; икӗ шӗвӗр мӑйракине йытӑ ҫине кӑнтарнӑ. Ун хыҫҫӑн тата виҫӗ-тӑватӑ качака. Эпир ҫеҫ те мар, йытӑ та тӗлӗнчӗ пулас, вӗрме чарӑнчӗ те вӗсем ҫинелле пӗр хушӑ пӑхса тӑчӗ, вара айккинелле ыткӑнчӗ. Эпир Толикпе юпасем пек хытса тӑрса юлтӑмӑр. «Эх, «качакасем» эпир,— терӗм вара Толике,— мӗн пек лайӑх выльӑха тарӑхтартӑмӑр мал-

тан. Халĕ питĕ лайăх пĕлетĕп ĕнтĕ: çынсем çеç те мар, выльăхсем те кӳренме пĕлеççĕ». «Хамăр йăнăша ăнланса илсе тӳрлетсен, каçарма та пĕлеççĕ»,— хушса хучĕ Толик, качакана мăйĕнчен ыталаса.

## Пулăра

Ачасем виççĕмĕш эрне ĕнтĕ каникулта. Паян Вадик ирхине ирех пулă тымалли хатĕрĕсене илчĕ те Витьăсем патне чупрĕ. Пĕчĕк кăна чул катăкĕ тупса, тусĕ çывăракан пӳлĕмĕн кантăкĕнчен печĕ, çакăн пек хăй килнине пĕлтересшĕн пулчĕ ĕнтĕ. Витя иккĕмĕш хутра пурăнать, çавăнпа персе лектерме те çăмăл.

Тепĕр темиçе минутран икĕ тус тусанлă çулпа Атăл хĕрнелле утрĕç.

— Ним те манса хăварман-и, пурне те илтĕн-и? — ыйтрĕ Вадик тусĕнчен утнă май.

— Çук, манман, мĕн кирлине веçех илтĕм, кăлпассипе çăкăр та чикрĕм. Пурте пур, ан пăшăрхан,— хуравларĕ Витя хавхалануллăн.

Тахçанах кĕтме пуçланăччĕ вĕсем çак куна, хăçантанпа кимĕпе пулла кайма ĕмĕтленетчĕç те. Кĕтнĕ кун тинех çитрĕ. Паян вĕсене Коля пиччĕше кимĕ паратăп тесе шантарнăччĕ, пĕр кунлăха та пулин чăн-чăн пулăçсем пулăр апла, терĕ. Каçса кайсах савăнчĕç ачасем.

Ирхи çанталăк ăшах мар пулин те, аттисене хывса çарран утас килчĕ вĕсен. Тусанлă çул тăрăх çарран утнинчен ырри мĕн пур-ха ĕнтĕ çуллахи вăхăтра! Ялти ачасемшĕн нимех те мар пуль-ха вăл, вĕсем хăнăхнă, хуларисемшĕн вара...

— Кинори пек,— кулса илчĕ Вадик,— йĕмсене кăна кантрапа туртса çыхмалла,— шӳтлерĕ вăл аллинчи вăлтине выляткаланă май. Юри тенĕ пекех, çăра тусана икĕ еннелле «пашлаттараççĕ» хăйсем.

— Вадик, секцинче мĕнле пыраççĕ сан ĕççем, лайăхах пуль? — ыйтрĕ сасартăк Витя пĕр хуша чĕнмесĕр пынă хыççăн. Ку ыйту вара Вадике çĕклентерсех ячĕ, пуçларĕ вара калаçма:

— Пĕлетĕн-и, саккăрмĕш «а» класра Васильев вĕренет, астăватăн пулĕ-ха, хĕллех, пĕлтĕр, пулă пек ишет тетчĕç ун пирки, вăт çавăнтан та иртрĕм, вăл халь иккĕмĕш выранта. Тренер мана ырласа кăна тăрать. Чăнах та ĕнтĕ, пĕлтĕр ăна, Васильева, никам та хуса çитейместчĕ те! Эсĕ хăв мĕнле, пĕрре путма тытăннăранпа халĕ те шывран хăратăн-и-ха? — ыйтрĕ Вадик Витьăран ăшри вăрттăн кулăпа.

— Çук çав, ун хыççăн эпĕ шыва та сахал кĕнĕ, темшĕн шикленетĕп кăштах,— хуравларĕ лешĕ, тусĕн йĕкĕлтекен куллине асăрхаман пек пулса.

— Пулмасть санран,— татса хучĕ Вадик ун сăмахне.

Çапла калаçкаласа вĕсем Атăл хĕррине çитсе тăнине те асăрхамарĕç. Коля пиччĕшĕ те кунтах иккен, унпа пĕрле ултă-çичĕ çулхи арçын ача. Çулăм пек хĕп-хĕрлĕ çӳçлĕ, хуратутлă пичĕ çинчи кăн-кăвак куçĕсем такама та хăй майлă çавăрмалла. Темĕнле именнĕн, çав вăхăтрах тем кĕтнĕ пек пăхса тăчĕ вăл Вадикпа Витя çине.

«Пăх-ха, пăх-ха, куç харшийĕ те, куç хăрпăкĕсем те хĕрлĕ,— шухăшласа илчĕ Витя,— пĕр-пĕр кулăшла кино ӳкернĕ чухне вилсе кайсах шыраççĕ пулĕ çакăн пек ачана».

— Мĕнле, ыйхă килмест-и-ха, кимĕ тахçанах хатĕр,— татрĕ Коля пиччĕшĕ Витя шухăшне.— Паллашăр, ку ман пиччен ачи, Степа. Ĕнер ялтан хăнана килчĕ. Эсир кимĕпе пулла каясса илтсенех тапратрĕ йăнкăртатма, сирĕнпе пĕрле пырасшăн, ыйт та ыйт, тет. Мĕнле, ачасем, илсе каятăр-и? Хăйсен патĕнче пĕве анчах вĕсен, кимĕ çине ларса та курман, тет. Пулă тытма пĕлет, ан хăрăр, хальхи колхоз пĕвисенче çăрттансем те пур, теççĕ. Вăт ишме пĕлмест

вара, эсир мӗнле, лайӑх ишетӗр-и? Шанса лартса яма пулать-и ӑна?

— Эпӗ питех мар, Вадик...— калаҫма пуҫларӗ Витя. Анчах лешӗ ӑна сӑмах та хуштармарӗ, «шатӑртаттарма» тытӑнчӗ те:

— Коля пичче, эпӗ аван ишетӗп, шкулӗпе те ман пек лайӑх ишекенни ҫук. Эпӗ секцине те ҫӳретӗп. Тренер та мухтать, часах пысӑккисен разрядне паратпӑр, тет. Ҫак кунсенчех ӑмӑрту пулмалла, ун чухне разряд та хӑпартаҫҫӗ акӑ. Степа пирки ан пӑшӑрханӑр...

Коля пиччӗшӗ Вадик ҫине пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те кулса ячӗ:

— Пулеметран пенӗ пекех калаҫатӑн, ҫавӑн пекех, калаҫнӑ пекех, хӑвӑрт ишетӗн пулсан, шанма та пулать пек,— терӗ шӳтлӗн; унтан, Степа енне ҫаврӑнса:— каятӑн-и вара, илсе кил апла хӑвӑртрах вӑлтусене, халь, ирхине, пулӑ лайӑх лекет,— тесе хучӗ. Степа, малтан вӑлтисене тӗмӗ хыҫне пытарса хунӑскер, йӑпӑр-япӑр чупса кайса илсе килчӗ.

— Юрать, тапранӑр апла,— хушрӗ, куҫне хӗссе, Коля пиччӗшӗ.— Эй, Степа, карттус та ҫук-ҫке сан, асту, шыв ҫинче сивӗ пулакан, ме-ха, ман «капитанкӑна» ил, пысӑкрах пулсан та — аптрамӗ... Ӑнтараканччӗ-ха вӑл хӑш чухне,— терӗ кӑмӑллӑн, Степӑна ҫурӑмӗнчен лӑпкаса.

Кимӗ ачасем ларсанах пӗр хушӑ вылянкаласа илчӗ, вара, Коля пиччӗшӗ тӗртсе янӑ хыҫҫӑн, итленӗ пек пулса, лӑпкӑнраххӑн шурӗ.

— Астӑвӑр, кимӗ пысӑк мар, питӗ ҫӑмӑл, ытла шала ан кӗрӗр! — кӑшкӑрчӗ аллине сулкаласа Коля пиччӗшӗ.

Кӗсменне Витя тытрӗ. Тем самантран хӑйсем палӑртнӑ вырӑна ҫитсе тухрӗҫ, вара кӳлӗ майлӑрах вырӑна пӑрӑнса кӗрсе юри хатӗрленӗ якорьне ячӗҫ. Пӑрахутсем ҫӳремеҫҫӗ кунта, лӑпкӑ; Атӑл ҫинчипе танлаштарсан, ҫанталӑкӗ те ӑшӑрах пек.

Кимĕ хумĕсем пĕтсен, пулăсене илĕртес тесе, шыва кăштах апат сапса пачĕç ачасем.

Вăлтасене янă хыççăн нумаях та кĕтме лекмерĕ, пуринчен малтан самаях пысăк пулă Степа туртса кăларчĕ.

— «Капитанкăн» ĕçĕ ку, вăл пулăшать,— шӳтлерĕ Вадик,— маттур, Степа.

Лешĕ, хавхаланса кайнăскер, вăтанса хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ. Хуратучĕ те çав вăхăтра таçта кайса çухалчĕ, пичĕ-куçĕ те, çӳçĕ те халь пĕр тĕслĕ.

Пуçланчĕ вара хĕрӳ ĕç. Пулă хыççăн пулă, вăлта яраççĕ те — туртса кăлараççĕ, яраççĕ те — туртса кăлараççĕ. Пĕр-ик сехет пек иртсен, сасартăк пулă кĕме пачах пăрахрĕ.

— Юрĕ,— терĕ Вадик,— вăхăтпа кĕрет вăл пулă, çыран хĕрне тухса канар пĕр хушă.

Çăмăл кимĕ çыран еннелле пăрăнчĕ. Кимĕ тĕпĕнче пулăсем хӳрисемпе çатлаттаркаласа илеççĕ.

— Лайăх ăнчĕ-ха,— савăнчĕ Степа.— Çапах та шел вĕсене,— терĕ сасартăк, пулăсем çине пăхса, вара, шывĕ сахаллине курса-ши, банка илсе кимĕ хĕрне пычĕ. Ăсас тесе пĕшкĕннĕчĕ кăна, «ăнăçтаракан капитанка» шыва ӳкрĕ. Ачасем пурте карттус еннелле туртăнчĕç, кимĕ, ахаль те питĕ çăмăлскер, тайăлса кайрĕ те — çурри ытла шыв ăсса илчĕ, ачасем виççĕшĕ те шыва чăмрĕç.

«Çырантан аякра-ха, ишмелĕх пур»,— вĕлтлетрĕ шухăш Вадик пуçĕнче. Вăл, халиччен кун пеккине курманскер, ним тума аптрарĕ. Таçта-таçта чĕре тĕпĕнче, халиччен пытанса тăнă пĕр пĕчĕк хăравçă кăмăлĕ çиеле тухрĕ, самантрах вăл тем пысăкăш пулса Вадикăн ăсне-пуçне хупласа хучĕ. «Пĕтрĕмĕр»,— терĕ те вăл ăшра çыраналла ишме тытăнчĕ. Хăйне вăл çак вăхăтра таçта сапаланса кайнă пек туйрĕ: хăй çумри ним те хăйĕн мар пек, алли те, ури те. Шухăш-ĕмĕчĕ кăна хăйĕн: мĕнле те пулин çыран хĕрне çитес.

— Степа, Степа, тыт кимĕрен, манран ан тыт-ха, ан хăра, путмастпăр,— çитрĕ татăкăн-татăкăн Витя сасси Вадик патне. «Вĕсем, вĕсем мĕнле? Витя пĕччен мĕн тума пултартăр-ха унта?»— пăраларĕ сасартăк Вадик пуçне тĕнче пысăкăш ыйту. Вара, хăй мĕн тунине ăнланса илнĕ пек пулса, каялла шывра шăмпăлтатакан ачасем патне çаврăнчĕ. «Хăрарăм, хăраса ӳкрĕм, хăравçă эпĕ, паян хăравçă — ыран сутăнчăк»,— хура çăхан пек шухăшсем пыра-пыра кĕчĕç Вадик пуçне.

Ачасем патне ишсе çитнĕ çĕре Витя Степана кимĕ хĕрринчен тыттарма ĕлкĕрнĕ. Лешĕ, ниçта кайса кĕрейми хăраса ӳкнĕскер, куçне те пăчăртаса хупса хунă.

Çурри путнă кимме Витьăпа Вадик çыран хĕрнелле туртрĕç. Инçех те марччĕ ĕнтĕ: «Ывăнтăм, ал ывăнчĕ, чăтаймастăп урăх»,— терĕ те Степа, кимĕрен вĕçерĕнчĕ. Вадик, васкаса ун патне ишсе пырса, Степăна месерле выртма пулăшрĕ, вара майĕпен, сулахай аллинчен туртса çыран хĕрнелле ишрĕ.

— Ан хăра, ан хăра, çăварна ан уç, пĕрех ишсе тухатпăр,— лăплантарчĕ вăл Степăна.

Тепĕртакран вĕсем, ывăннăскерсем, виççĕшĕ те хăйăр çине тухса выртрĕç. «Хăраса ӳкрĕм, Витя, ав, манран япăхрах ишет пулсан та, Степăна путма паман, туртса кăларса кимĕ хĕрринчен тыттарнă»,— çаврăнчĕ Вадикăн пуçĕнче çаплах пĕр шухăш.

— Вадик, эсĕ чăнах та питĕ лайăх ишетĕн, хăçан çавăн пек ишме вĕренĕп-ши,— терĕ сасартăк Витя пĕр сăмах чĕнмесĕр выртнă хыççăн. «Йĕкĕлтеместши вăл мана?»— вĕлтлетрĕ шухăш Вадик пуçĕнче, анчах лешĕн сассинче те, сăнĕнче те усал шухăш паламарĕ.

— Вĕренетĕн, Витя, манран та лайăхрах ишме вĕренетĕн, сан кăмăл çирĕп, чăтăмлăх та пур, тата... лайăх тус эсĕ,— терĕ пĕрремĕш хут Вадик ăна.

Ним чĕнмесĕр выртакан Степа та пуçне çĕклерĕ:

— Эпӗ те Вадик пек лайӑх ишме вӗренетӗп, Витя пек лайӑх тус пулатӑп.

## Тутлӑланнӑ

Çуркунне Верӑсен те, Лидӑсен те улмуççисем шап-шурӑ чечеке ларчӗç. Иккӗшӗ те вӗсем хӑйсен пахчинче халиччен улма парса курман йывӑç уйӑрса хунӑччӗ. Кӑçал вара çав йывӑççем те чечекре, çавна пулах-тӑр, Верӑпа Лидӑн кӑмӑлӗ те уçӑ, ара, миçе çул кӗтрӗç ӗнтӗ вӗсем ку телее. Шӑварчӗç, çӗрне кӑпкалатрӗç, хӗл ларсан, шӑши тавраш ан кӑшлатӑр тесе, йывӑç кутӗнчи юра таптаса тухрӗç, çуркунне, юр пусса турачӗсем ан хуçӑлччӑр тесе, ӑна кӗреçепе айккинелле ывӑтрӗç. Шартлама сивӗре те, çил-тӑманра та манмарӗç вӗсем йывӑççем çинчен. Турачӗсене кӗрт ӑшне кӗрсе юлса хуçӑласран сыхларӗç, питӗ асӑрханса та тӗплӗн пӑхрӗç, мӗн кӑсӑкланнтарнине, мӗн пӗлменнине Егор Михалчран кайса ыйтрӗç. Сад ӗрчетес енӗпе ун чухлӗ пӗлекен çын çук та пулӗ урӑх вӗсен ялӗнче. Кӗрлӗ-çурлӑ килӗрен киле çӳрет вӑл, хуçисемпе пӗрле пахчана тухса пӑхать, тӗрлӗ сӗнӳсем парать; питӗ ырӑ, лӑпкӑ çын. Хӑй пӗр-пӗр усал, чӑкӑлтӑш çынна асӑрхасан: «Çук, сад ӗрчетесси пулмасть унран, сад этемми мар, çынпа çын пек калаçма та пӗлмест, ӑçтан ӑнлантӑр йывӑç-курӑка»,— тет. Ял хушшинче ӑна хисеплесе «Сад Егорӗ» теççӗ. Пӗр-пӗр çын пирки кам та пулсан Сад Егорӗ пекех вӑл тесен, ял халӑхӗ пӗр сӑмахсӑрах ӑнланать: калаçу кунта лайӑххи çинчен пымалла. Хисеплӗ ят, хисеплӗ çын Сад Егорӗ. Çавӑнпах пулӗ Лидӑпа Вера та туртӑнаççӗ ун енне. Нумай пулӑшрӗ вӑл вӗсене.

Кӑçал тинех чи кӗтнӗ, чи телейлӗ çур çитрӗ. Çапла, Лидӑн та, Верӑн та улмуççисем шап-шурӑ чечекре. Миçе хутчен тухса пӑхмаççӗ пулӗ вӗсем пахчана

кунне. Малтан Верӑсем патне чупаççӗ, вара — Лидӑсем патне. Юрать хирӗçех пурӑнаççӗ те. Тӑм ӳксе чечексене ан пӗтертӗр тесе, çунтармаллисем те тупса хучӗç вӗсем. Типӗ тислӗк çунтарма хушнӑччӗ Сад Егорӗ. Ӑçта шанан, пӗрер иркӳлӗм тӑм çапса хуçсан...

Малтанлӑха чиперехчӗ-ха икӗ хӗрача, кайран тем пулчӗ-çке, час-часах пулас улмасем пирки хирӗçкелеме тапратрӗç. Ним çук çӗртенех Верӑн улмуççийӗн чечекӗ Лидӑна килӗшми пулса пычӗ, Лидӑн вара — Верӑна. Малтан пӗр пек тӗсех килӗштерекенсем, халӗ пачах урӑхла. Лидӑн улмуççийӗн чечекӗ Верӑна ытла шурӑ, тӗссӗр пек туйӑнать, вӑл вара кӑштах кӗренрех тӗс юрататъ, хӑйӗн улмуççин чечекӗ пеккине. Лида вара шӑпах çавӑн пек тӗсе юратмасть те.

Ку малтанлӑха кӑна. Каярах ӗç-пуç тата шаларах кӗрсе пычӗ. Чечексем вырӑнне улмисем чӑмӑртанса туличченех хӑшӗн панулмийӗ тутлӑрах пулассипирки тавлашрӗç.

— Çук,— тет Лида,— пӑхсах паллӑ, тем тесен те манӑн тутлӑрах пулать.

Вери те çине тӑрсах хӑйӗнне мухтать, мӗн чухлӗ тӑрӑшрӗ те вара вӑл, тутлӑ мар панулми ӑçтан пулма пултартӑр. Ёненмест Вера, чи тутлӑ панулми унӑнах пулмалла.

Пӗррехинче вӗсем Сад Егорне хирӗç пулчӗç.

— Егор Михалч, калӑр-ха, тархасшӑн, мӗнле йывӑçран тутлӑ панулми пулать,— ыйтрӗ Лида Верӑран маларах ӗлкӗрес тесе.— Атту эпир вӗçӗмех хирӗçетпӗр.

— Эй,— терӗ Сад Егорӗ,— тупнӑ хирӗçмелли, улмисем пулсан хӑвӑрах курӑр-ха, хӑвӑр пӑхнӑ пулсан, хӑвӑр шӑварса ӳстернӗ пулсан, иксӗрӗн те тутлӑ пулать, хӑвӑр ӗçӗрех тутлатать-çке вӗсене.

Лидӑпа Вера татах ним ӑнланмасӑр юлчӗç: мӗнле-ха апла, сӑмахран, иккӗшӗ те ӗçленӗ вӗсем, çапах

панулмисем иккёшён те пёр пекех тутлă пулаймасть ĕнтĕ.

Панулмине пĕр кун, пĕрле чухне тутанса пăхма шутларĕç, пĕр-пĕринчен вăрттăн татса çиме юрамасть.

Вăхăт иртнĕçемĕн Лидăн кăмăлĕ ытларах та ытларах пăсăлса пырать. Çимĕçĕ нумаях мар та, пĕр улт-çичĕ улма кăна Верăн, анчах пăхса ытармалла мар, кунран-кун саралса пырать панулми, туп-тулли пылак шывпа тулса ларнă тейĕн.

Хăйсен пахчине кĕрсен Лида тарăхсах каять. Вĕсене Верăсен панулмийĕсемпе танлаштармалли çук, сип-симĕс, шăл та витеймĕ. «Эх, кун пек пулса тухасса пĕлнĕ пулсан-и»,— тарăхать Лида. Анчах халь тин ним те тăваймăн. Мăшкăл курмалли кăна юлать.

— Анне,— терĕ вăл сасартăк пӳртелле ыткăнса кĕрсе,— атя çав йывăçа касса Верăсен пеккине лартатпăр. Пĕлетĕн-и, мĕнле хитре вĕсен улми, тутлă пулĕ-ха тата.

Килĕшмерĕ амăшĕ, итлесшĕн те пулмарĕ Лида сăмахне.

— Юрать эппин,— терĕ вара хĕр,— анчах паянтан вăл ман улмуççи мар.

Хăй çав вăхăтрах Вера патне тухса чупрĕ те ăна хăй шухăшне пĕлтерчĕ.

Шăп çав кун ĕнтĕ вĕсем Верăсен панулмине çисе пăхрĕç. Ытармалла мар тутлă иккен! Питĕ тутлă! Уйăх хыççăн уйăх... Хĕл ларчĕ. Лида кăçал улмуççийĕ патне тухса та пăхмарĕ. Çавăн пек симĕс, йӳçĕ улмаллăскер мĕн тума кирлĕ ăна.

Пĕррехинче шкултан килнĕ хыççăн Вера Лидăсем патне пычĕ. Вĕри чей ĕçтернĕ хыççăн амăшĕ сакайне анчĕ те, пĕр пысăк чашăк панулми илсе тухса, сĕтел çине пырса лартрĕ.

— Çийĕр,— терĕ Вера çине пăхса,— тутлă вĕсем, куна Лида хăй пăхса çитĕнтернĕ. Ун улмуççийĕн çимĕçĕ, çийĕр, çийĕр.

Верăпа Лида пĕрер панулми илчĕç те çиме тытăнчĕç. Шалт тĕлĕнсе кайрĕç хĕрачасем.

— Питĕ пылак-çке. Эсĕ ма йÿçĕ терĕн, пирĕннинчен те тутлă! — хавасланчĕ Вера.

Пĕр сăмах каламасăрах Лида йăпăр-япăр тумланчĕ те çил-тăмана пăхмасăрах кĕрт тăрăх улмуççи патне ыткăнчĕ.

## Т у с с е м

Петьăпа Мишша виçĕ уйăх ĕнтĕ пĕр-пĕрне кÿренсе пурăнаççĕ. Ахаль, ним çук çĕртен хирĕçсе кайнăччĕ те... Ытти хăшпĕр ачасем пек çапăçсах çапăçмаççĕ-ха вĕсем, ютшăнарах кăна çÿреççĕ. Кам та пулин: «Мĕн çитмен сире, мĕн пайламан, мĕншĕн пĕр-пĕринпе килĕштерейместĕр»,— тесен, чăнах та, иккĕшĕ те ним калама аптранă пулĕччĕç. Вăл ĕç вĕсен пуçĕнчен тахçанах тухса ÿкнĕ. Хăнăхнипе, пĕр-пĕрне парăнас килменнипе кăна çапла тыткалаççĕ хăйсене.

Вĕренессе вĕсем иккĕшĕ те улттăмĕш класра вĕренеççĕ, пĕрин — «б», теприн — «а». Малтан, класcене уйăриччен, Петьăпа Мишша пĕр парта хушшинчех ларнă, халĕ вара кун çинчен никам умĕнче те шарламаççĕ. Апла пулин те, урама лапталла вылямa тухсан, Петя халĕ те Мишша пурripe çуккине пăхать, темшĕн кичемрех пек ăна унсăр. Вăт малтан пырса сăмах хушма вара ниепле те пултараймасть. «Мишша та çапла пулĕ, ăна та аванах мар ĕнтĕ мансăр»,— шухăшлать хăш чухне Петя. Мĕн тĕлĕнмелли пур-ха ĕнтĕ кунта? Мишша, сăмахран, ÿкерме ăста, ÿкерессе те вăл вылянă пек çеç, питĕ çăмăллăн ÿкерет, хăвăрт тата. Пăхатăн та кайран — шалт тĕлĕнмелле. Пĕр-пĕр хитре ÿкерчĕк туса та хунă. Петя, тахçантанпах тăрăшать пулсан та, тем пек ÿкерес килсен те,— ÿкерейместь ун пек. Амăшĕ те, ывăлĕн кăмăлне кура, лайăх сăрăсем тупса илсе пачĕ. «Эх,—

шухăшлать Петя,— çакăн пек сăрăсемпе Мишша мĕн кăна ӳкерсе хуратчĕ пулĕ! Мĕнех вара,— лăплантарать хăйне çавăнтах,— ун выrăнне эпĕ купăс ăста калатăп». Юлташĕсенчен пĕри те купăс калама пĕлмест, аслă классенче вĕренекенсем те ăмсанаççĕ ăна. Вăн пĕлтĕр, юрă учителĕ чирлесен, шкул хорне те вăлах юрлаттарчĕ. Районта иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ вĕсен хорĕ. Мишша та, ав, купăс калама хăнăхкаланăччĕ, хăйĕн купăсĕ çукки те пĕтерчĕ пулас ăна. Икĕ арçын ачан пĕр-пĕринчен вĕренмелли пур та-ха, вăт çав хирĕçӳ...

Анчах пĕррехинче пĕтĕм ĕç-пуç тепĕр майлă çаврăнса тухрĕ. Петя шкултан килнĕ-килменех, кăшт уçăлса çӳренĕ хыççăн, урок тума ларчĕ. Унччен те пулмарĕ, урамра Мишша сассине уйăрса илчĕ. «Кшш-ша, кша тенĕ!»— кăшкăрать Мишша. Петя чӳречерен пырса пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ. Мишшасен автанĕпе Петьăсен автанĕ хĕрсе кайсах çапăçаççĕ, иккĕшĕ те юнланса пĕтнĕ. Палласа уйăрса илме те çук. Уйăрса илесси вĕсене ахаль чухне те, çапăçман чухне те, хĕнтерехчĕ. Таçтан тупăннă тата, урамĕпе тенĕ пекех пĕр пек чăпар автансем вĕсен.

Петя чупса тухнă çĕре Мишша автансене уйăрса яма ĕлкĕрнĕ, пĕр автанне, хăйсенне, хул хушшине хĕстерсе утатчĕ. «Вилсех кайман пулĕ те»,— шухăшларĕ Петя хăйĕнчен аякрах та мар çуначĕсене сарса хунă автанĕ патне пырса. Вăл та, хăйсен автанне йатса, юнланнă тĕкĕсене асăрхануллăн уйăрнă хыççăн, витене кайса ячĕ. «Икĕ-виçĕ кун хушши ниçта та кăларма юрамасть, вăйсăрскер, пĕр-пĕр çĕре çитсе тухса, вилме те пултарать»,— шухăшларĕ хăй ăшĕнче. Кун пирки килтисене те асăрхаттарчĕ, ăçтан шанан, лешсем, кун çинчен пачах пĕлменскерсем, кăларса та ярĕç. Кайран вара Мишшана мухтанмалăх пулать ачасен умĕнче, вĕсен автанĕ пирĕн автана çĕнтернĕ тесе çӳрĕ-ха. Мĕнле пулсан та, автана лайăхрах пăхас, тӳрех курччăр ачасем: çакăн пек

çирĕп автана Мишшасен автанĕ çĕнтерес çук-ха теччĕр. Ачасем кайран Мишшаран хăйĕнчен кулĕç, ахаль вĕçкĕнленет тейĕç.

Виççĕмĕш кунне Петя картишне тухрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ. Картишĕнче автан çӳре парать. «Анне,—кăшкăрса ячĕ Петя,— автанне эсĕ кăлартăн-и?» Хăй çавăнтах, амăшĕн хуравне кĕтсе тăмасăрах, витенелле ыткăнчĕ. Мĕнле япала, тепĕр автанĕ те кунтах... «Эх,— терĕ Петя,— лешĕ, апла пулсан, витери, хăйсен мар, Мишшасен автанĕ пулнă-çке. Вăл пур! Хăйсен тесе миçе кун пăхса пурăнчĕ те вăл ăна».

Унччен те пулмарĕ, Петя патне Мишша чупса çитрĕ: «Пирĕн ăçта?—ыйтрĕ вăл ним калама аптраса тăнă хыççăн.— Анне ку автан пирĕн мар, терĕ. Эпĕ сирĕнне хамăр автан тесе питĕ лайăх пăхрăм». «Эпĕ те»,— терĕ Петя, куллине пытарса. Унтан, пĕрпĕринпе виçĕ уйăх ыррăн калаçса курманскерсем, хире-хирĕç пăхса илчĕç те, ахăлтатса кулса ячĕç. «Вăт кулăш»,— тесе хучĕ Петьăн амăшĕ вĕсем çине ăшшăн пăхса.

Мишша хапха патнелле пăраннăччĕ ĕнтĕ, Петя темрен хăранă пек ун хыççăн ыткăнчĕ. «Мишша,— терĕ вăл хыпăнса,— атя пӳрте, çĕнĕ кĕвĕ каласа паратăп, хирĕç мар пулсан, сана та вĕрентĕп». Лешĕ, çакна кăна кĕтсе тăнă пекех, пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

## Сенкер ачалăх

Сукмак çине тухсан, Алексей вăхăтлăха чарăнса тăчĕ. Пурте çавăн пекех, унччехи пекех. Уй варринчи пĕччен хурама та хăйне юри кăтартасшăн, çиле хирĕç утса кайма хатĕрленнĕ пек саркаланса ларать. Ачаранах астăвать ку йывăça Алексей. Мĕншĕн касман ăна?! Çĕрĕçĕпе ĕçлекенсене те кансĕрлемест-ши вара вăл? Сухаласа-сӳрелеме те... Çак шухăш тахçанах пыркаланă Алексей пуçне, паян та, нумай çул

иртсен, хăнăхнă ыйту вĕлтлетрĕ. Анчах халĕ те, унччен те тупсăмне шыраса аппаланмарĕ вăл.

Алăри чăматанне çăмăллăн вылятса илчĕ те малалла утрĕ Алексей. Чăматан! Мĕншĕн ун выранне тĕсне çухатнă сăран сумка мар-ха?! Астăвать ăна вăл, питĕ лайăх астăвать шкул еннелле тӳрремĕн каякан сукмака та, инçех мар курăнакан миша юпине те, яланах шăхăрса юрланă кĕвве те, кăшт куçа хĕссе куларах пăхакан хĕрачана та... Пурте, пурте асра. Эх ачалăх! Ăссăр та шухă ачалăх, ытла телейлĕ-çке эсĕ. Ытла та виçесĕр-çке эсĕ. Виçесĕр хĕрӳ, виçесĕр айван. Çак сукмакпа шкулалла чупнă чухне шутланă-ши çав кунсем яланлăхах асра юлаççĕ тесе.

Çул хĕрринчи утмăлтурат чечекне асăрхасан, Алексей вăхăтлăха чарăнса тăчĕ. «Чечексене юрататăп»,— янраса килчĕ таçтан ачалăх сасси.

Пĕрремĕш класранах астăвать вăл Ольăна. Çулла, хĕртсе хĕвел пăхнă чухне, учитель вĕсене экскурсие илсе кайнăччĕ. Ачасем, кăшт сулхăнрах вырăн тупса, пĕр çĕрте кĕпĕрленсе тăратчĕç.

— Лĕпĕш,— терĕ сасартăк Оля, вара никама пăхмасăрах ун хыççăн ыткăнчĕ. Кăшт инçерех кайсан, хăй те, симĕс кĕпеллĕскер, улăхпа пĕрлешсе кайнă пек пулчĕ, çухалчĕ. Ахăлтатса кулни кăна янраса тăчĕ пĕр хушă Алексей хăлхинче. Çак вăхăтра ун хăйĕн те хĕрача пулас килсе кайнăччĕ, Ольăпа аллаллăн тытăнса, улăх тăрăх чупас килетчĕ.

Шăп çав кун пухнă чечексем хушшинчен чи хитрисене уйăрса илсе Алексей Ольăна тыттарнăччĕ. Аванмарлансах Оля ăна хирĕç: «Тавах, эпĕ чечексене питĕ юрататăп!»,— терĕ.

«Эпĕ те, эпĕ те чечексене питĕ юрататăп!»— кăшкăрса çӳрерĕ вăл, улăхра ачасенчен каярах юлса.

Нумай мар. Тепĕр икĕ çухрăм кăна. Мĕнле пулсан та каç пуличчен çитмелле яла. Кая юлса пырса

кĕме аванах мар. Тĕрлĕ шухăша пĕр тĕвве пухса, Алексей чун хавалĕпе ял еннелле утрĕ.

Акă вăл. Юрăсенче, сăвăсенче мухтакан сăмах Алексей чунне сăнă пек кĕрсе тăрăнчĕ. Никам та, ним те калама пултараймасть: усал-и вăл, лайăх-и, ыррине курнă-и эсĕ унта, яппăххине-и, тăван ял — хаклăран та хаклă кĕтес.

Часах йăмрасем айĕнче ларакан пӳрт умне çитсе тăчĕ вăл. Çĕнĕ пӳрт. Хапхи кăна ĕлĕкхи. Сасартăк пӳрт çумĕнче выртакан чула асăрхарĕ. Тăпра кĕрсе юлнă çурăкран, пур-çук вăйне пухса, курăк шăтать, тĕнче курма çуралнă вăй. Çĕнĕ пурнăç! Хĕвел çине кăшт кăна пăхса илме çуралнă пурнăç! Пур йăх-яха, нишлĕхе, вак-тĕвеке юри хăйне кăтартма çуралнă вăй. «Килĕр, курăр! Чул çурăкĕнчен курăк шăтать!» — теес килсе кайрĕ Алексейĕн хыттăн. Вăл чăматанне çĕре лартрĕ те чул патне пырса тăчĕ. Пуçа тата тĕрлĕ асаилӳсем кĕпĕрленсе килчĕç.

Çапла, ытти ялти пĕтĕм арçын ачасем пекех, эпир те вăй виçме юрататтăмăр,— аса илчĕ Алексей.— Çуркунне пахча хыçĕнчи уничене тухаттăмăр та тытăнаттăмăр вара тӳпелешме. Пĕррехинче манăн Анаткас ачипе, Виталипе, кĕрешме тӳр килчĕ. Асли те аслăрах вăл манран, вăйлăраххи те куçкĕретех. Ним тума та çук, пуриншĕн те пĕр йĕрке: чеpетпе кĕрешмелле. Малтанлăха хама аванах тытрăм, каярах, вăй пĕтсе килнине сисрĕм... Нумая пымарĕ пирĕн кĕрешӳ, çӳлелле çĕклерĕ те вăл мана, ыраттармасăр, хуллен çĕр çине хучĕ. Хам та астумастăп, кӳреннипе-ши е тарăхнипе, те ним тума аптранă енне, ӳпне çаврăнтăм та ĕсĕклесе макăрма тытăнтăм. Йĕри-тавра пăхса тăракан арçын ачасем каçса кайса кулма тапратрĕç. «Пăтă кайса çи, макăрса вăхăта сая ан яр»,— теççĕ. Пĕри, халь камне те астумастăп, пуçа та çĕклесе пăхмарăм, ман ума хутпа чĕркенĕ суханпа çăкăр татăкĕ пырса хучĕ.

«Çи, хама валли илсе килнĕччĕ те, шеллес ĕнтĕ, макăракансене йăпатмалла»,— йĕкĕлтерĕ мана. Эпĕ пур,ниепле те макăрма чарăнаймастăп, пĕтĕм ăшчике сирсе сирĕлми çилĕ тулса ларчĕ. Çук, ачасене мар, Виталие те мар, хама хам кураймарăм çак вăхăтра. Ытла та намăс-çке, пурин умĕнче те хĕрача пек ĕсĕклесе выртатăп. Халь тин ним тума та çук, пуçа çĕклесе ачасем çине пăхаймастăп.

Нумаях тăмарĕç вĕсем ман умра, çаврăнчĕç те лапталла выляма чупрĕç. Сасартăк пуçа темĕнле айванла шухăш вирхĕнсе кĕчĕ. Аякрах та мар пысăк чул выртать. Пурте тапăнса пăхнă эпир ăна йăтма, анчах никам та çĕклесе илейменччĕ.

— Витали,— терĕм эпĕ куççуль витĕр,— çак чул ыран пирĕн тĕлте пулать, пĕрех йăтса çитеретĕп эпĕ ăна.

Каларăм çеç, каланинчен хам хăраса ӳкрĕм: ăçтан йăтайăп-ха эпĕ ăна? Ачасем татах пурте ахăлтатса кулса ячĕç, Витали кăна ним те шарламарĕ.

Тепĕр кун ирхине урама тухрăм та — тĕлĕнсех кайрăм, пăхатăп: хапха патĕнче чул выртă парать. Çав чул, эпĕ йăтса килетĕп тесе шантарнă чул.

Уничере мана ачасем сырса илчĕç.

— Маттур, Лекçи, маттур,— теççĕ. Хирĕç ним калама аптраса тăратăп. Тепĕртакран ман пата Витали пырса тăчĕ.

— Лекçи,— терĕ вăл лăпкăн,— малалла хăв тума пултарайман ĕçе«тăватăпах» тесе намăса ан кĕр. Шухăшласа пăх малтан. Эпĕ пырса хутăм ăна, ан çиллен, юлташла анчах эпĕ, култарас килмест ачасене санран,— терĕ.— Халлĕхе ачасене ним те ан кала, чула йăтма тытăнсан, каярах, хăвах пĕтĕмпех каласа паратăн. Ан шухăшла, лайăхмарланма кирлĕ мар, ăнланĕç вĕсем сана,— терĕ çирĕппĕн.

Кăшт вăхăт иртсен, Алексей, ача чухнехи пекех, патак тытрĕ те пӳрт умĕнчи картана шакăртаттарса

илчĕ. Чӳрече карри уçăлчĕ те, тĕксĕм тутăр çыхнă мĕлке кантăк çумне лăпчăнчĕ.

— Кам унта? — ыйтрĕ, анчах чӳрече уçса чăрманмарĕ, тӳрех васкаса урама тухрĕ. Ĕмĕрте пĕрре кăна уçăлнă пек, вăраххăн чĕриклетсе уçăлчĕ самаях тайăлнă хапха. Пӳрт кĕтессине, çӳле, хăма татăкĕ çырса çапса хунă. Паçăр асăрхаманччĕ-ха ăна Алексей. «Здесь живет заслуженная колхозница...» — вуларĕ вăл. «Ĕç кăна çынна пурнăç парать, хурлăха та мантарать, савăнăçа та ытла картран иртсе кайиччен, вăхăтра тытса чарать»,— тетчĕ вăл яланах. Эх, Анюк аппа, Анюк аппа!

Алексей кил хуçи умне пырса тăчĕ. Ватăлнă. Чылаях ватăлнă.

— Паллаймарăн-и, пăхсам лайăхрах, Анюк аппа,— пăшăлтатрĕ Алексей хăй ăшĕнче.

— Ара, Лекçи мар пулĕ те, кай, Лекçи-çке,— мăкăртатрĕ хĕрарăм та. Тепĕр самантран икĕ мĕлке пĕр-пĕрин патне туртăнчĕç. Айккинчен кам та пулин пăхса тăрас пулсан, пĕр сăмахсăрах амăшĕпе ывăлĕ темелле ĕнтĕ вĕсене. Анчах...

Алексей виççĕмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра вĕсен килне чăтмалла мар хăрушă инкек пырса çапрĕ. Утă турттарса килнĕ чухне машина шырлана чăмнăччĕ, ашшĕпе амăшĕ вара, çӳлте ларса пыракансем, иккĕшĕ те тухтăрсем патне илсе кайнă чухне çул çинчех вилсе кайрĕç. Хальхи пек астăвать Алексей çав хăрушă куна. Çĕрле, çывăрнă çĕртен вăранса кайсан та, вăл час-часах: «Тĕлĕк ку, вилмен вĕсем»,— тесе шухăшласа илетчĕ.

Анюк аппăшĕ пулăшрĕ ăна кайран. Вăл, вĕсен ялĕнчен çитмĕл-çитмĕл пилĕк çухрăм леререх пурăнаканскер, килне-çуртне пăрахса, Алексей патне пурăнма куçрĕ. Ют çын мар-çке-ха, амăшĕн аппăшех. Вăл, хăйĕн ачи-пăчи çукскер, ывăлне пăхса ӳстернĕ пекех ӳстерчĕ ăна. «Анюк аппа,— тетчĕ Алексей час-

часах,— эпĕ ӳссен сана хамран хăвармастăп, хамах пăхатăп»,— тетчĕ.

Вунă класс пĕтерсен, Алексей хулана тухса кайрĕ, салтака кайса килчĕ, халĕ ак, институт дипломне илсе, тăван яла, хăй вĕреннĕ шкула таврăнчĕ.

Пӳрт ăшчикĕ, чăнах та, ăшшăн кĕтсе илчĕ хăнана. Пĕччен хĕрарăм пурнăçĕ палăрмаллипех улшăннă иккен. Мĕн кирли пурте пур унта: юлашки вăхăтра тухма тытăннă диван та, тăвата çемçе пукан, телевизор, шифоньер. Ĕлĕкхи сарăхса кайнă сăмавар вырăнне çĕнни ларать. Ахăртнех, колхоз парнеленĕ пулас ăна, илемлĕн тем çырса хунă.

— Ку телевизорĕ хама кирлех те мар та, хушăран çеç, кăшт-кашт спектакльсем пулсан куратпăр, тăван-пĕлĕш çук ман ялта, кӳршĕсем килкелеççĕ, тĕпĕртетсе ларатпăр вара çапла... Ăçтан пĕлен, ватă çыннăн вилесси те инçе мар, пĕр-пĕччен вилсе выртăп та никам та килсе пăхмĕ. Кун пек çапах килсе çӳреççĕ. Çамрăксем килсен — пулăшкаласа та хăвараççĕ. Килеççĕ, сан тусусем те килеççĕ. Оля та кĕркелесе тухать,— терĕ лăпкăн.

Алексей ашшĕн, вăрçăра пулнăскерĕн, темиçе медаль те пурччĕ. Сайра-хутра кăна, ывăлĕ ыйтнипе, кăларса кăтартатчĕ вăл вĕсене Алексее. Арча тĕпĕнче, шурă тутăрпа чĕркесе хунăскерсем, илĕртмеллипех илĕртетчĕç-çке-ха вĕсем ăна. «Çак медаль çинчен каласа пар-ха»,— ыйтатчĕ Алексей хушăран пĕрне суйласа илсе. Мĕнле хавасланса итлетчĕ вăл ашшĕне ун чухне! «Кашни медалĕ — хăй пĕр пурнăç»,— шухăшлатчĕ кашнинчех.

Пĕррехинче вăл ашшĕнчен ирĕк ыйтсах ачасене кăтартма шутларĕ вĕсене. Лешсем шăп çав вăхăтра лакăм пекки алтнăччĕ те, темиçе метр аяккарах кайса, çав шăтăка патак персе кĕртмелле вылятчĕç.

Черетпе тытса пăхрĕç вĕсем медальсене. Лайăххах, çирĕппрех, пысăкрах туйрĕç ачасем çак вăхăтра

хăйсене хăйсем. Ванюш, ыттисем хушшинче чи пĕчĕкки, пĕр медальне кăкăрĕ çумне çакса хучĕ те, пысăк аттипе шаплаттарса, чыс парса иртсе кайрĕ. Ачасем пурте, калаçса татăлнă пекех, урра кăшкăрса ячĕç, Ванюша йăтса çӳлелле ывăтма тытăнчĕç.

Çав самантра вĕсен умне тăсланкă та яланах ихĕлтетме юратакан Юрик пырса тăчĕ.

— Пар-ха,— терĕ вăл Ванюша, вара: — Ва! — тесе чаплаттарчĕ тутине, ним пулман пекех медале кăкĕнчен вĕçертсе илчĕ те алтнă шăтăкалла тĕллесе печĕ.

Пуринчен малтан Ванюш тăна кĕчĕ. Вăл, пĕчĕк те чĕрĕскер, ыттисемпе танлаштарсан, вĕсен пилĕкĕ таран çеç пулсан та, пĕтĕм вăйне пухса, Юрик патнелле ыткăнчĕ.

— Мĕн кирлĕ? — терĕ сасартăк лешĕ шăлне йĕрсе. Хăй çав вăхăтрах Ванюша айккинелле тĕксе ячĕ. Ачасем, çакна курса тăракансем, самантрах Юрике ярса илчĕç. Пуçланчĕ вара тĕркешӳ. Хăй паянхи пек урса кайнине Алексей астумасть те. Кашни кăшт та пулин Юрике «лектерсе» пăхасшăн. Ванюш, вăйĕ çитес çуккине туйса, Юрик урине шырарĕ, унтан васкамасăр пĕшкĕнсе ларчĕ те, çемçе вырăн тупса, пур вăйĕпе ăна пĕçĕрен çатăртаттарса çыртрĕ. Юрик çухăрса яни пурне те тăна кĕртрĕ пулас, ачасем пурте ура çине сиксе тăчĕç. Çук, халиччен кун пек пулманччĕ-ха вĕсен ялĕнче, кун пеккине курманччĕ-ха Алексей ял ачисене. Халĕ те, Юрик упаленсе тăрсан, пурте йĕрĕннĕ пек, кураймасăр пăхрĕç ун çине.

— Мĕн эсир, ухмаха ернĕ-и мĕн? — мăкăртатрĕ Юрик пыр тĕпĕнчен тухакан хăйăлти сассипе.— Мĕн, кирлĕ-и, парас-и? — пĕр-ик утăм турĕ вăл хăй умĕнче тăракан Ванюша хирĕç.

— Хăвна парап,— касса татрĕ лешĕ çирĕппĕн,— медале перетĕн, уншăн çынсем, уншăн... — терĕ

те, Юрик çумĕнчен иртсе медале кайса илчĕ, кăкĕнчен çирĕплетсе Алексее тыттарчĕ.

Каçалапа Алексейсем патне Юрик амăшĕ вĕçтерсе пынăччĕ. Мĕн кăна каласа вăрçмарĕ вăл ăна. Суда паратăп, тет. Мăшкăллаттармасах хам ачаран, тет. Çук, нимĕн те чĕнмерĕ Алексей. Аппĕпе амăшĕ те шарламарĕç. Темшĕн, пултараймарĕ вăл ку ĕç çинчен вĕсене каласа пама. Намăс пулчĕ ăна, çапăçнăшăн мар, Юрик çавăн пек хăтланнишĕн.

«Çапах та пирĕн ял ачисем маттур»,— шухăшларĕ вăл аппĕ хăйне пуçтахланса çӳренишĕн вăрçнă вăхăтра та.

— Сан тантăшусем пурте çын пулчĕç,— калаçрĕ Анюк аппа Алексей асаилĕвне татсах.— Санькасен Юрикки çеç... Ниçта тĕплĕн ĕçлемест: ялтан — хулана, хуларан яла чупать,— тесе хучĕ халĕ çеç Алексей çав Юрике аса илнине пĕлнĕн.

— Эпĕ те шкулта ĕçлеме тытăнатăп, хамăр ялах ячĕç. Сан патах ячĕç, Анюк аппа,— терĕ вăл хуллен, шывланнă куçĕсене сăтăракан ватă хĕрарăм çумнерех пырса.

* * *

Шăналăк карнă вырăн чуна темĕнле лăпкăлăх кӳрет. Пĕр пĕчĕк тĕнчере пек кунта: ырă, лайăх, лăпкă. Халлĕхе анчах-ха ку. Кайран? Ыран мĕнле? Çак «пĕчĕк тĕнчерен» тухсан? Ырантан пуçласа вăл — Алексей Семенович. Хăйĕн нихăçан манăçайми асаилĕвĕсемпе вăл ыран шкула кĕрĕ, хальхи, паянхи ачалăха кĕрсе кайĕ, унпа пĕрлешсе, ватлăх валли, кайран валли аса илмелли кунсем пухĕ.

# Ă н л а н ч ĕ ç

Сасартăк Егоров сиксе тăчĕ:

— Юрамасть, пĕлетĕр-и, юрамасть Яковлева линейка умне кăларса тăратма, мĕншĕн пĕтĕм шкула

пĕлтерес ун ҫинчен? Ку таранччен тăрăшни, хамăрăн ырă ят ҫав самантрах пĕтет. Шухăшлăр-ха хăвăрах, линейкăра ырлаҫҫĕ-ырлаҫҫĕ те пире, халĕ вара — курăр, шкула килмесĕр ҫӳрекенсем те тупăнаҫҫĕ пулать пирĕн хушăра. Мĕн тейĕҫ пире? Вымпелсем? Миҫе уйăх никама пами тытатпăр та эпир вĕсене. Айăплас пулсан, калас пулсан, халь хамăр хушăрах калаҫар, ăна ҫеҫ те мар, Яковлева пулăшса пыма уйăрнă пионерсене асăрхаттарас,— терĕ отряд совечĕн председателĕ.

Темиҫе куҫ доска умĕнче тăракан Яковлева пăраларĕ. Лешĕ, тĕмсĕлсе пăхакан Ленăна асăрхасан, куҫне тартса: «Ман ҫума ҫирĕплетнисем айăплă мар ĕнтĕ»,— терĕ шăппăн, анчах ăна никам та илтмерĕ. Кĕтесре ларакансенчен тахăшĕ чăтăмсăррăн ихĕлтетсе илчĕ.

— Линейка умĕнче мар пулсан, ашшĕ-амăшĕсемпе пуху иртternĕ чухне каламалла, мĕнрен хăрамалла, мĕншĕн пирĕн атте-аннесен пĕлмелле мар вара кун ҫинчен? Куҫ умĕнчех улталанă-ҫке вăл амăшне. Икĕ кун шкула килмен, амăшĕ кун ҫинчен пĕлмест те, юрать-ха Алексей Семенович сиснĕ,— каларĕ Ключников та.

Акă мĕн хăрататчĕ те ĕнтĕ Яковлева. Пуҫра пĕр шухăш кăна: амăшĕн кун ҫинчен пĕлмелле мар. Ҫук, улталасшăн мар вăл амăшне, нихăҫан та суйман вăл ăна. Ахаль те час-час чирлекенскере, юрамасть халь пăшăрханма. Анчах кама калас-ха, кама систерес, тен, шухăш-кăмăла уҫса парсан, мĕншĕн кун пек пулса тухнине пĕлтерсен, ăнланĕҫ те Яковлева. Пырĕ патне капланса килнĕ куҫҫулĕ сасартăк ҫилле куҫрĕ. Хăйне вăрҫчăр, вăл чăтать, анчах амăшне ан пĕлтерччĕр. Линейка умне тухса тăма та хирĕҫ мар вăл халь. Тата... Мĕн ҫухатасран хăраҫҫĕ ачасем ăна линейка умне кăларса тăратсан? Мĕн пур пирĕн класăн ҫухатмалли? Шугланать анчах-ҫке ҫиччĕмĕш «б» малтисен шутĕнче.

Хăйсем туйăмăççĕ-ши вара вĕсем çакна? Хăй тĕллĕн халиччен темиçе хутчен те шутланă шухăша калатех паян Володя.

— Эсир çавăн пек,— терĕ вăл.— Шкула пĕлтересшăн мар ман çинчен. Класс ятне ярасран хăратăр. Хăравçăсем эсир. Çак виçĕ вымпела çухатасран шикленетĕр. Хăвăр та пĕлетĕр, пирĕн класра нимĕнле тимуровецсен команди те çук, тасалăхпа йĕркеллĕ вĕренӳ те. Мĕнле те пулин «3» лартса паччăр тесе, кашни отличник теприне, начар вĕренекеннине, кăтартса çыртарма хатĕр. Пулăшас, ăнлантарас текен вара — çук. Урайне те дежурнăйсем килес умĕн Вальăпа Вера кăна тасатаççĕ. Яланах. Иккĕшĕ çеç. Тасалăхшăн панă вымпел пирĕн класăн мар, вăл— Вальăпа Верăн. Ыттисемшĕн, пирĕншĕн хăть те класра пиçен шăтса ӳстĕр. Паллах, кашни шăматкун линейкăра шкул директорĕ ырлани килĕшет ĕнтĕ пурне те. Эпĕ хама ырламастăп, эпĕ пĕлетĕп хам тĕрĕс мар тунине. Эсир...

Класс шăпланчĕ. Тахçанах пурте ăнланнă, пĕлнĕ, анчах харпăр хăй умĕнче те сасăпа калама хăяйман хăрушă чăнлăха паян Яковлев, класра япăх вĕренекенсен шутĕнчен тухса курман пионер, хăй каларĕ. Тĕрĕсех ĕнтĕ, ыйтнă-ыйтманах ун умне тетрадьсем кăларса хунă, çырса ил, ан ӳркен кăна, ыйтса кăна ан чăрмантар. Халь вăл çакăн пек калать. Тĕрĕсне.

Урамри ӳлесе вĕрекен çил те сасартăк шăпланчĕ. Вăл та çак класс вăрттăнлăхне тăнлать тейĕн. Кĕтменччĕ класс паянхи пуху, Яковлева пăхса тухма пуçтарнă пуху, çакăн пек çаврăнса тухасса. Никам та çук пек класра: доска умĕнче тăракан Яковлев Владимир тата... ним тума аптраса ларакан класс.

Шăплăха Оля вожатăй татрĕ. Вăл ачасене пăхса çаврăнчĕ те: «Мĕн калас-ха ман»,— тенĕн, хулпуççисене выляткаларĕ. Юри тенĕ пекех тата, класс ру-

ководителĕ те çук, виçĕ кунлăх района кайнă.

— Ку шухăш мана тахçанах канăç памастчĕ-ха, шухăшлăр кун пирки, тархасшăн, шухăшлăр, тĕплĕн, васкамасăр,— тăсрĕ вăл сăмахне. Хăйĕн çав самантра тĕрлĕ шухăш явăнчĕ пуçĕнче: «Чăнах, мана та килĕшнĕ-çке класс çинчен яланах ырă калаçни. Ăшра мухтаннă та уншăн. Ара, ман класс-çке вăл. Эпĕ те айăплă мар-ши куншăн? Ăçтарах йăнăшрăм-ши вара? Лайăхрах вĕренекенсемпе кăна çыхăну тытнинче мар-ши ман айăп?» Вара татах Яковлев çине пăхса малалла калаçрĕ: — Володя, ман сана та пĕр-ик сăмах калас килет. Пĕр енчен илсен, эсĕ питĕ тĕрĕс каларăн, пур ун пек çитменлĕх пирĕн класăн. Çитменлĕх çеç те мар-ха вăл, пысăк йăнăш, анчах эсĕ ăшра савăна-савăнах çырса илнĕ-и вара вĕсем хурса панă тетрадьсенчен? Санран темиçе хут вăйсăр хĕрачасем партăна çĕклесе урай шăлнă чухне ним те шухăшламарăн-и? Йăнăшасси пулать, анчах çав йăнăша туйса илнĕ хыççăн та çавăн пекех пулнă-çке эсĕ. Тата... Паянхи шухăша та класс çитменлĕхне тăрă шыв çине кăларас тесе мар, хăвна хӳтĕлес ĕмĕтпе кăна каларăн-çке? «Юрать, эпĕ лайăх мар пулам апла, анчах эсир хăвăр та ырах мар»,— тесшĕн мар-и эс? Мĕнле ăнланмалла сана?

— Володя,— илтĕнчĕ Лена сасси.— Ăнлантар ачасене, хăвна та çăмăлрах пулĕ, пĕлетпĕр эпир, туятпăр, хăв та ӳкĕнетĕн икĕ кун шкула килменнишĕн. Ан пытар пирĕнтен.

— Нимшĕн те ӳкĕнместĕп эпĕ. Ним те ан ыйтăр. Килес килмен те — килмен.

Урама тухсан та Володя хăлхинче вожатăй сасси янрарĕ: «Мĕнле ăнланмалла сана?» Чăнах, пĕтĕм класс хăй айăпне ăнланнă пекех, Яковлев та хăй тĕрĕс мар тунине пĕлет-ха. Пĕрре çеç мар, паян çеç те мар шухăшлать вăл кун çинчен. Анчах ниеп-

ле те хăйне алла илеймест. Урăх нихăçан та, никамран та пăхса çырмастăп, мĕн ăнланманнине тӳрех учительтен ыйтатăп тесе, миçе хутчен сăмах пачĕ хăйне хăй. Çук вĕт, малтанлăха йĕркеллех пурнăçласа пырать пек, пĕр эрне пек иртсен, ак сана, сăмах панин тĕсĕ те юлмасть.

Ачасем çинчен каланă чухне те йăнăшрĕ. Пурте пĕр пек мар-çке, Лена, сăмахран, яланах пулăшма хатĕр. Çапах та килĕшет Яковлева хăйсен класĕ. Çирĕп класс, пурте пĕрле пухăнсан, темĕнле йывăрлăха та çĕнтерес пек вĕсем. Кӳрентермерĕ-ши паян вĕсене? Çук пулĕ, ку тĕрĕслĕхе хăçан та пулсан каламаллаччех.

Шухăшсем хăйсемех тепĕр çĕре куçрĕç. Мĕнле ăнлантармалла-ха вĕсене хăй ăçта кайса икĕ кун шкула килмесĕр юлнине? Амăшне Вадимсем патне каятăп тенĕччĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕ икĕ кунлăха хулана кайнă, юлташне пĕччен кичем тенĕччĕ. Вадимĕ вара кун çинчен пĕлмест те. Мĕн тейĕ амăшĕ? Татах йĕрет ĕнтĕ. «Аçусăр ӳстернĕрен çавăн пек хыт чунлă пулатăн-ши»,— тет татах. Ма калать-ши çак сăмаха? Пĕлет-çке амăшĕ, унран хакли Володьăн урăх никам та çук. Ашшĕ... Ашшĕ пирки вăл ним калама та пултараймасть, амăшĕ каланă тăрăх, питĕ лайăх çын. Нихăçан та ун пирки усал сăмах каланине илтмен вăл. Икĕ çул каярах тухса кайнă ашшĕ вĕсем патĕнчен, çавăнпа лайăх астăвать вăл ăна. Çӳллĕ çын, сарлака хул-çурăмлă. Кӳршĕсем амăшне: «Пăх-ха ĕнтĕ, шăп ашшĕ сăнĕ кĕрсе пырать ачуна»,— тесен, Володя савăнать, килĕшетчĕ ăна ашшĕ. Вĕсем уйрăлнин сăлтавĕ те кăсăклантарман ăна. Тĕрĕсех калать амăшĕ: «Пĕчĕкрех халь çынсене айăплама, ӳссен, пурнăç курсан, хăвах ăнланăн». Çак кăна канăç памасть Володьăна: «Мĕншĕн пĕрре те килсе каймасть-ха вăл амăшĕ патне. Çук, Володя патне мар, амăшĕ патне». Икĕ çул ĕнтĕ амăшĕ: «Килет пулĕ-ха, килсе курать пулĕ-ха»,—тесе кĕтет. Вăл çук та çук. Володя,

мĕн, пурăнать, амăшне кăна шеллет вăл. Юлашки вăхăталла, ав, час-часах вырăнпах выртакан пулчĕ. Больницăна та каясшăн мар. Вара... Вара Володя ашшĕ патне кайса килме шутларĕ. Аякра мар-çке ĕнтĕ, Çĕрпӳре кăна пурăнать, кунăн кайса кунăнах килме пулать.

Пĕр уйăх Володя ашшĕ адресне кĕсйинче чиксе çӳрерĕ. Пĕр уйăх амăшĕ шкулта апат çиме парса янă укçана салатмарĕ. Вара пĕр уяр сивĕ кун тытрĕ те çĕмĕрттерчĕ Çĕрпĕве. Ăнăçлăх кайса килчĕ вăл унта, ашшĕне курса калаçрĕ...

Мĕнле калас ĕнтĕ çакна амăшне?! Ашшĕ килессе пĕлет-ха, пырса куратăпах терĕ-çке вăл. Ывăлĕ ун патĕнче пулнине амăшне каламастăп тесе сăмах та пачĕ.

«Çук,— шухăшларĕ Володя,— тем тусан та, никама та атте патĕнче Çĕрпӳре пулнине пĕлтерместĕп. Вăл хăй кăмăлĕпе мар, ывăлĕ чĕннипе кăна килнине пĕлсен, амăшĕ татах пăшăрханĕ». Çакăн пек шухăшсемпе Володя питрен çапакан çиле хирĕç утрĕ.

Халиччен çиччĕмĕш класра ашшĕ-амăшсен пухăвне шкул ачисемпе пĕрле ирттерекен марччĕ. Алексей Семенович вара, Оля вĕсен класĕнче мĕнле калаçу пулса иртнине пĕлтернĕ хыççăн, директортан ирĕк ыйтса, пухăва урăхларах йĕркелеме шутларĕ. Мĕнех вара, класс пурнăçĕ çинчен Алексей Семенович мар, ачасем хăйсемех каласа панинче мĕнех япăххи пултăр? Вĕренӳ пирки класс руководителĕ, паллах, хăех калĕ-ха, ыттисене — ачасем. Кам пĕлет, тен, хăшпĕр ашшĕ-амăшĕ класра хăйсен ачине мĕнле ĕç шанса панине те манса кайма пултарнă.

Пухăва пынисем, стена çинче яланах курма хăнăхнă вымпелсем çуккине асăрхасан, тӳрех ырă мара сисрĕç.

Малтан калаçса татăлнă пекех, пухăва Алексей Семенович уçрĕ, нумай, васкамасăр калаçрĕ вăл. Хи-

сеплеççĕ ăна ашшĕ-амăшĕсем. Кӳрентермесĕр, çав хушăрах мĕн каламаллине калатех. Нихăçан та пĕрне хурласа-пĕтерсе, теприне «çӳл тӳпене» çĕклемест. Тем пек тарăхсан та, кам çинчен те пулин каланă чухне унăн лайăх енĕсене аса илтерет. «Килте уйрăмшар пулсан та, шкулта эпир пĕр çемьери сынсем,— тет вăл яланах.— Пĕрин çитмелĕхĕ — теприн, теприн лайăх енĕ — тата теприн те». Çавна пулах-ши, ашшĕ-амăшĕсем ачисенчен пĕрне ырăпа асăннă чух савăнса лараççĕ, шухăшламалли тупăнсан — пурте пĕрле шухăшлаççĕ. Ун калаçăвĕнче «вĕсен» сăмах та сайра хутра кăна тухать, ытларах чухне вăл «пирĕн» тет. Халĕ те, ак, хăй сăмахне: «Пирĕн сирĕнпе, ашшĕ-амăшĕсемпе, калаçмалли пур»,— тесе вĕçлерĕ, вара ачасем еннелле тинкерчĕ. Малалла ачасем ашшĕ-амăшĕсене хăйсен класри ĕçĕсемпе паллаштарчĕç, кашни пионер хăйне шанса панă ĕçне мĕнле пурнăçланине пĕлтерчĕ, звеньевойсем — хăйсен звенинчи ĕç-пуçне. Анчах халиччен хи пек çирĕпех калаçмаççĕ вĕсем, ашшĕ-амăшĕсем умĕнче вăтанни мар, урăххи, иртнĕ эрнере пулса иртнĕ калаçу пусать юмах-сăмаха. Темскер, каласа пĕтерейменни, ырă марри палăрчĕ вĕсен калаçăвĕнче. Юлашкинчен Егоров сăмах илчĕ. Пурин çинчен те, нумаях пулмасть Володя Яковлев каланă сăмахсене хăй ячĕпе каларĕ. «Çĕнĕлле, урăхла пурăнатпăр эпир малалла,— терĕ вăл юлашкинчен, хăй çавăнтах, «ĕненеççĕ-ши» тенĕ пек, ашшĕ-амăшĕсем çинелле куç айĕн пăхса илчĕ.— Халлĕхе эпир вымпелсене дружинăна тавăрса патăмăр, анчах нумайлăха мар, илетпĕрех эпир вĕсене каялла,— терĕ çирĕппĕн,— анчах ултавсăр, кашни пионер çине тăнипе».

Ачасем те лăштах пулчĕç пулас. Кирек хăçан, кирек мĕнле айăп та ăна сынсем умĕнче йышăниччен хура тĕтре пек хупласа тăрать. Кунта та çаплах. Халĕ класс та ирĕкленсе кайнăн туйăнчĕ вĕсене, тем

таса марри, кирлĕ марри çухалчĕ пек. Яковлев кăна лăпланаймарĕ-ха. Амăшĕ килейместĕп тесе класс руводителĕ патне çыру çырса янăччĕ, çанталăкĕ те сивĕ, вăл, час-часах чирлекенскер, хăрарĕ пулас тата тепĕр хут шăнса пăсăласран. Халь кăна ура çине тăркаларĕ. Амăшĕсĕр те тапратĕç-ши вăл шкула килмесĕр икĕ кун çухалса çӳренине? Ашшĕ-амăшĕсем урлă пĕлме пултарать-çке вара вăл.

Çав вăхăтра, класс вăхăтлăха шăпланнă чухне, алăка шаккарĕç, вара, Володя ашшĕ кĕрсе тăчĕ. «Каçарăр, вăхăтра ĕлкĕреймерĕм, киле çитрĕм те, ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пулать терĕç, вара — тӳрех кунталла, паллаймарăр пулас-ха, Яковлев Владимир ашшĕ эпĕ, унччен хулара пурăннă та»,— терĕ сывлăх суннă хыççăн, хăй куçĕпе Володьăна шырарĕ.

Çук, амăшĕ мар пулсан, тен, калаçмĕччĕ те вăл çак сынпа, анчах амăшĕ, амăшĕ кĕтет-çке ăна. Кам пĕлет, тен, Володьăшăн кăна кĕтет. Пултăрах, пĕрех хаклă çын вăл вĕсемшĕн. Тен, ашшĕпе ывăлĕ утнине курсан, амăшĕ телейлĕ пулĕ, ашшĕпе амăшĕ шăкăл-шăкăл калаçнине курсан Володя та савăнĕ.

Вĕçленес патне çитнĕ пуху нумая пымарĕ. Никам та тапратмарĕ вара Яковлев икĕ кун шкула пымасăр çӳренине. Ахалех, ыйтмасăрах ăнланчĕç-ши? Çапла та пулĕ çав, туссем-çке, миçе çул пĕрле вĕренеççĕ те.

## Каçару

Валька ыйхă тĕлĕшпе амăшĕ хăйне пĕчĕк чухне юрласа çывратакан сăпка юрри пек тикĕссĕн шăпăртатакан çумăр сассине илтрĕ те вырăн çинчен тăрас килменнипе пĕр хушă хускалмасăр выртрĕ. Амăшĕ ĕнтĕ ăна темиçе хут та пыра-пыра лăпкăн та ачашшăн чĕнчĕ:

— Валька, Валька тетĕп, çитет вырăн çинче ачашланса выртма, тăма вăхăт. Тусу, Павлик, ик-ви-

çĕ хут та килсе кайрĕ сан пата. Эсĕ пур, çаплах çывăратăн.

— Мĕн каларĕ вăл?— йăпăр-япăр тăрса ларчĕ Валька.— Астурăм, эпир ĕнер пулла кайма калаçса татăлнăччĕ унпа, çавăнпа килнĕ пулĕ-ха вăл.

— Кая юлнă эсир, мĕн пулли лектĕр халĕ сире, çывăрса юлнă,— терĕ те амăшĕ, Валька çумĕнчен пăрăнса, тĕпелелле кĕрсе кайрĕ.

Валька васкасах тумланчĕ те чӳречерен урамалла тинкерчĕ. Тӳпере хĕвел пайăрки те курăнмасть, пĕтĕмпех çумăр пĕлĕчĕсем хупăрласа илнĕ. Çумăрĕ те васкамасăр таврари йывăç-курăкпа, хуралтă тăррисемпе тем çинчен вăрттăн калаçать. Ахăртнех, хăй тĕнче тăрăх çӳресе мĕн курни-илтнине каласа парать вĕсене, лешсем ăна кĕтни çинчен, уншăн тунсăхлани çинчен хавасланса пĕлтереççĕ пулĕ. Вĕçкĕн çерçисем те паян шăпăртах, ав, урам урлă, Павликсен хапхи хӳттинче, чăххи-чĕппи те тусан ăшне меллĕн вырнаçнă та, вăрттăн калаçăва ăнланасшăн вăхăтран вăхăта пуçĕсене чалăштарса пăхкаласа илеççĕ. Хăй ĕçĕсемпе çӳрекен Муççа урампа лĕпĕстетсе иртрĕ, килнелле пăрăнас умĕн, пĕлĕт çинелле кăмăлсăррăн пăхса илсе, лăс-лăс силленчĕ те малалла сĕнкĕлтетрĕ.

Муççа — кӳршĕре пĕччен пурăнакан Праски кинемейĕн йытти. Вăл, хуçи пекех ватăскер, хĕрлĕ те çăмламас пысăк йытă. Унсăр пуçне Праски кинемейĕн каçăр мăйракаллă качакипе икĕ сурăх пур. Сурăхĕсене Муççа тиркемест-ха, анчах качаки вара — уншăн чăн-чăн тăшман. Праски кинемей крыльца çине тухнă-тухман, качаки сухалне чĕтрентерсе ун патне чупса пырать те хăйне çăкăр татки парасса кĕтсе тăрать. Муççа та çăкăр кĕтет, анчах Праски кинемей патне пырсанах качаки шĕвĕр мăйракисене ун çинелле тĕллет. Мĕнле чăтăн-ха кун пек мăшкăла. Хуçи лăплантарни кăна тытса тăрать Муççана качакана тăн кĕртме. Тата Праски кинемей качакине

кĕтӳрен килсен сăвать те Муççа умне сĕт çине çăкăр туранă чашăк лартса паратъ. Ку вара — чăн-чăн ырлăх Муççашăн. Хуçи çине ăслă куçĕсемпе тав тунăн пăхса илет те çиме тытăнатъ.

...Праски кинеми упăшкинчен çамрăкла икĕ ачапа тăрса юлнă. Вăрçă пуçлансанах упăшкине вăрçа илсе каяççĕ те, часах хыпарсăр çухалать вăл. Унтанпа сахал мар вĕри куççуль юхтарнă Праски кинеми тĕттĕм çĕрсенче. Ытлă-ситлĕ пурнăçпа икĕ ачана ура çине тăратса çын тума çăмăлах пулмарĕ-çке ăна. Колхозра та ĕçĕ хĕрарăм валли тĕттĕмрен тĕттĕмччен юлмалăх пулчĕ çав ун чух. Пуçне усмарĕ вăл, халăх хушшинче яланах пулни те, ырăпа усала çурмалла пайлани те вăй пачĕ пулас. Çитĕнчĕç ачисем, вĕренсе çын пулчĕç. Хĕрĕ геолога вĕренсе тухрĕ те инçетре пурăнать хăйĕн çемйипе. Ывăлĕ колхозра бригадирта ĕçлетчĕ. Анчах тăхăр çул каялла ытла та шăрăх çу килчĕ. Темрен-çке ыраш пусси тивсе кайнă. Тырпула çăлас тесе Ваççили никамран малтан кĕреçе йăтса уя ыткăннă. Ыраша çăлса хăварнă халăхпа пĕрле, анчах хăй больницăран таврăнаймарĕ. Çакăн хыççăн Праски кинемейĕн шуралма пуçланă пуçĕ юр пек шуралчĕ. Çĕрле çывраймасăр енчен енне çаврăнса ахлатса выртнисем час-часах пулкаларĕç юлашки вăхăтра. Вара вăл ура çине тăрать те крыльца çине тухса ларать. Муççа, çакна кĕтнĕ пекех, ун çумне пырса выртса пуçне Праски кинемей арки çине хурать те хуçин салхуллă калаçăвне тăнласа выртатъ. Сахал мар илтнĕ вăл çак сăмахсене, анчах яланах чăтăмлăн итленĕ, хуçине чăрмантарма хăйĕн шанчăклă чĕрипе хăймасăр выртнă...

Валька çумăр тумламĕсем кӳлленчĕкре ташлаташла пĕчĕк хăмпăсем тунине пăхса тăчĕ пĕр хушă, унтан, асламăшĕ кун пек чухне çумăр вăраха тăсăлать тенине аса илсен, ассăн сывларĕ:

— Лар халĕ килте, ку çумăрта ăçта каятăн, ав,

анне те, паян уя кăшман çумлама каймалла текенскер, килтех ларать»,— пăшăлтатрĕ вăл.

Унтан, тем аса илнĕн, васкасах амăшĕ хатĕрлесе панă апата кап-кап хыпкаларĕ те: «Анне, эпĕ Павлик патне кайрăм»,— тесе тухса чупрĕ.

Павлик, тусĕ пырса кĕрсен, хавасланса кайрĕ.

— Вăт аван та эсĕ килни! — сиксе тăчĕ вăл сĕтел хушшинчен.— Ирт малалла. Эпĕ разведчиксем çинчен кĕнеке вулатăп, питĕ интереслĕ. Эсĕ вуланă-и ку кĕнекене?— ыйтрĕ вăл кĕнекине Валькăна кăтартса.

— Вуланă, кайран вулăн. Атя тупсăмла вылятпăр. Пĕл: мăйракаллă, тăват уралла, варринче — юмах. Мĕн вăл?

— Ĕне!— терĕ Павлик шутласа тăмасăрах.

— Ĕне-е! Эсĕ ху ĕне! Парăнатăн-и? Телевизор!

— А-а-а! Халĕ мана тăнла: çăлтăр мар — çутатать, кайăк мар — вĕçет. Мĕн?

— Ракета! Мар-мар, спутник!

— Пĕлтĕн. Атя шашкăлла вылятпăр,— сĕнчĕ Павлик.

Пĕр хушă шашкăсене вырăнтан вырăна куçарнă сасă кăна пулчĕ пӳлĕмре. Акă Валька икĕ хутчен Павлике çĕнтерчĕ, унтан — Валькăна Павлик. Тепĕр хутĕнче нихăшĕ те çĕнтереймерĕ. Валькăн тусне питĕ çĕнтерес килетчĕ, вара чăтаймарĕ:

— Санăн мар сикмелле, манăн! Куратăн-и, ку шашкăна эсĕ халь кăна куçартăн. Ку тĕрĕс мар!— тарăхса кайрĕ вăл.— Йĕркеллĕ выляместăн пулсан — эпĕ санпа выляместăп!

— Аха, хăй çĕнтереймерĕ те — мана айăплать! Питĕ кирлĕ выляма, эпĕ санран пурпĕрех лайăхрах вылятăп шашкăлла!— тарăхрĕ Павлик те.

Туссем пĕр-пĕрин çине халь-халь сиксе ларас пек пăхаççĕ, куçĕсенче — тарăху.

— Мĕн тавлашатăр-ха, чĕп автансем?— илтĕнчĕ Павлик асламăшĕн сасси.— Килкартине тухăр, унта çумăр шывĕ сарайне юхса кĕрет, çулне тепĕр еннел-

ле уҫса ярӑр тавлашиччен,— терӗ мӑнукне атӑ ларт-са панӑ май.

Ачасем, мирлешме сӑлтав тупӑннипе, хаваспах тӑхӑнчӗҫ те пӳртрен тухса чупрӗҫ. Часах, кӗреҫесем илсе, шыв кӳлленчӗкне ҫул уҫса ячӗҫ.

— Мӗн хушнине турӑмӑр, айта ларса канар,— терӗ Павлик мӑн ҫынла.— Валька, эсӗ ӳссен кам пуласшӑн?— ыйтрӗ вӑл хӳтӗ ҫӗре кӗрсе ларнӑ хыҫҫӑн.

— Манӑн летчик пулас килет, тата ытларах, Андриян Николаев пек,— космонавт,— пӗлтерчӗ хӑйӗн ӗмӗтне Валька.

— Эпӗ, атте пек, комбайнер пулатӑп,— терӗ Павлик.— Ҫӗр ҫинче чи кирли — ҫӑкӑр, ун пирки учительница та калать. Вӑт, эпӗ ҫӑкӑр ӳстерекенни пулатӑп, ман ӗҫ — чи кирли.

— Летчик е космонавт та кирлӗ ҫӗр ҫинче. Тӗслӗхрен, санӑн инҫе хулана васкаса ҫитмелле. Мӗнпе хӑвӑртрах ҫитме пулать? Самолетпа. Е тата, ҫынсем уйӑх ҫине е урӑх планета ҫине вӗҫме пуҫлаҫҫӗ. Кам илсе каять сана, э-э? Космонавт! Вӑл, летчик пек, космос карапне тытса пырать!— парӑнмарӗ Валька та.

— Тытса каях карапна, эпӗ ӳстернӗ ҫӑкӑрсӑр нумаях вӗҫеймӗн! Ирӗксӗрех ман пата телеграмма яратӑн: «Ҫӑкӑр пӗтрӗ, Павлик тусӑм, ярса пар!»— тесе. Вӑт! Камӑн ӗҫӗ — чаплӑ ӗҫ, э-э?

— Эпӗ хирӗҫ мар сан ӗҫе, тӗрӗс, ҫӑкӑр кирлӗ япала. Астӑватӑн-и, Игорь Павлович: «Космос карапӗсем ҫутҫанталӑка тӗпчеҫҫӗ, ялхуҫалӑхне нумай пулӑшу параҫҫӗ»,— тесе каланине? Апла пулсан — ку та чи чаплӑ ӗҫ!

Туссем пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларчӗҫ. Унтан Павлик:

— Валька, Сантӑрсен Мишши Праски кинемин йӑран ҫинче хӑяр пулса ҫитнӗ терӗ. Манӑн питӗ хӑяр ҫиес килет, пирӗн халӗ чечекре кӑна. Атя кайса вӑрлатпӑр, э?!— терӗ Павлик.

— Кайрăмăр!— сиксе тăчĕ Валька. Вара пахчари çӳллĕ курăка сиркелесе, йĕпенесси çинчен шухăшламасăрах, Праски кинемин карти патне çитсе тăчĕç. Картине тахçанах юсаман пирки юписем çĕрĕшнĕ, вырăн-вырăнпа тайăлма пуçланă.

— Валька, асăрханарах каç, тӳнтерсе ярас мар.

Тăрмашкаласа кинеми пахчине кĕчĕç.

— Павлик, йăранĕ ăçтарах? Никам та асăрхамарĕ-ши пире? — кăн-кан пăхкаласа илчĕ Валька.

— Ан хăра, кун пек çумăрта кинеми йытти те пусма айĕнче тĕлĕк курсах çывăрать пулĕ-ха. Кинеми... карчăксем çумăр чух çывăрма юратаççĕ. Пирĕн асанне кăштах канам тесе выртать те харлаттарсах çывăрать, тупă персен те вăранмĕ.

— Сахалтарах калаç, ертсе кай хăяр йăранĕ патне!

— Эх, хăравçă та иккен эсĕ. Шутла — эпир разведкăра, пирĕн чĕлхе тытса таврăнмалла е тăшманăн вăрттăнлăхне пĕлмелле!

— Тупăннă «разведчик». «Чĕлхи» хăяр-и-ха тата?— йĕкĕлтесе илчĕ тусне Валька.

Йăран патне çитсе хăярне татма пĕшкĕннĕччĕ кăна икĕ тус, Муççа вĕрни илтĕнсе кайрĕ.

— Аха-а! Лекрĕр-и? Халĕ хăтăлаймăр, пурпĕрех сире йытă тытса лăскать, эпĕ сирĕн çинчен аçусене каласа паратăп. Мĕнле пионерсем эсир! Вата карчăка кӳрентеретĕр. Лекрĕр халĕ!— шартах сиктерчĕ туссене янравлă сасă.

Анюк, вĕсенчен пĕр çул кĕçĕн класра вĕренекен кӳршĕ хĕрачи, ывăç тулли симĕс сухан татнă та çиесие хушăкран пăхса тăрать.

Хăяр çинчен мансах, икĕ тус каялла вирхĕнчĕç. Валька хăй те сисмерĕ — карта урлă сиксе те каçрĕ. Павлик вара... Павлик васкаса карта çине хăпараймарĕ, Муççа, харлата-харлата, Павлика шăлавартан ярса та тытрĕ. Ача тапкаланса-тапкаланса йытăран вĕçерĕнчĕ те, тĕк пек, карта урлă сикрĕ. Шарр турĕ

кӗпи ҫурӑм хыҫӗнче. Шӑтӑр-шатӑр тӳнсе кайрӗ кивӗ карта. Хӑраса ӳкнӗ туссем, каялла ҫаврӑнса пӑхмасӑр, килелле чупрӗҫ. Сарайне кӗрсе вырнаҫрӗҫ те аран-аран сывлӑш ҫаварнӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗрне ӳпкелеме тытӑнчӗҫ. Пӗри те айӑплӑ пуласшӑн мар хӑйсем. Кайран ахӑлтатса кулма тытӑнчӗҫ. Ытла та кулӑшла туйӑнчӗ вӗсене кинеми пахчинчен тарни. Кулса вӑйӗсем пӗтнӗ хыҫҫӑн, тем аса илнӗ пек пулса, шӑпӑрт пулчӗҫ.

— Ну и ну! Лекрӗмӗр-тӗк лекрӗмӗр. Намӑса ӑҫта хурас! Пионерсем вӗт эпир! — тарӑхса каларӗ Валька.

— Кам пӗлнӗ кун пек пуласса! Тата Анюкӗ тухса тӑнӑ пахчине, кур-ха, симӗс сухан ҫиес килнӗ унӑн! — ҫаплах хӑйӗн айӑпне туйман пек калаҫрӗ Павлик.

— Урамра ачасене эпир ҫын пахчине кӗни ҫинчен каласа кӑтартать ӗнтӗ вӑл. Сӳпӗлти. Кӗркунне, шкула кайсан, ачасем пирӗнтен кулма тапратӗҫ ӗнтӗ «пахча вӑррисем» тесе. Пӗтӗм шкулӗпех пӗлӗҫ пирӗн ҫинчен. Эх, намӑс та! — пӗр хушӑ тем ҫинчен шухӑшласа ларнӑ хыҫҫӑн Валька чӑтаймарӗ: — Итле-ха, Павлик, лайӑх мар турӑмӑр, чӑнах та. Атте-аннесем пӗлсен пӗҫерккӗ пулать-ха пире паллах. Вӑл татах-ха, чӑтма пулӗ. Праски кинеми умӗнче мӗнле намӑс! Вӑл пире яланах мӗнпе те пулин хӑналатчӗ. Пирӗнпе яланах ырӑ пулнӑ, эпир ӑна кӳрентертӗмӗр! Картине ватса хӑвартӑмӑр вӗт! — ҫаплах хӑйсене питлерӗ Валька. — Павлик, хамӑр айӑпа каҫарттарас пулсан, мӗн тумалла?

— Каҫару ыйтмалла, паллах, — мӑкӑртатрӗ лешӗ.

— Каҫару... Каҫарупа карта юсанса лармасть. Ӑна хамӑрӑн юсамалла!

— Енчен пире Праски кинеми картишне те кӗртмесен?

— Кӗртмесен... Тӳрех сирӗн пахчаран каятпӑр

та юсама тытӑнатпӑр. Ӑнлантарӑпӑр, каҫару ыйтӑпӑр кинемейрен,— парӑнмарӗ Валька.

Калассан-калассан вӗҫне тухрӗҫ. Ыран ирех карта юсама тытӑнмалла, юсанӑ хыҫҫӑн курӑнӗ малалла мӗн тумалли. Праски кинемирен килет вӗсене каҫарасси.

## Т у н с ӑ х

«Тӗлӗнмелле, халиччен кун пек пулакан марччӗ-ҫке»,—тенӗн, урай варринче кушак енчен енне пӑхкаласа ларать. Чӑнах та ӗнтӗ, лапкӑшӗпех кирлӗ-кирлӗ мар хутсем йӑваланса выртаҫҫӗ, унта та кунта ҫыхса майласа хунӑ япала куписем. Арӑшпирӗш ҫавӑрттарса пӗтернӗ пӳртре тем ытлашши пек, ҫав вӑхӑтрах тем ҫитмест пек те. Лисук аппа та унчченхинчен ытларах ӑшталанать: пӗр япалине тытса пӑхать вӑл, шухӑшлать-шухӑшлать те ӑна хӑй вырӑнне хурса теприне ярса илет. Ҫавӑнтах, ҫенӗкрен шӑпӑр илсе кӗрсе, васкамасӑр, майӗпен те тӗплӗн урай шӑлма тытӑнать. Пӳртре татах армути шӑрши сарӑлать. Темшӗн, ытти кушаксем мӗнле те, ку вара чӑтма пултараймасть армути таврашне. Халӗ те акӑ, чӳрече карри хушшине сӑрхӑнса кӗрекен хӗвел ӑшшинче лараканскер, алӑк патнелле тапса сикрӗ, асӑрхамасӑр калушран сӑрхӑннӑ шыв ҫине пусрӗ. Темрен йӗрӗннӗ пек сӑмсине вылятkаланӑ хыҫҫӑн, йӗпеннӗ урине силлесе типӗтме тапратрӗ. Ҫаплах ким те ӑнланаймарӗ-ха вӑл: мӗне пӗлтерет ку, халиччен пулсан ҫакӑн пек шыв кӳлленчӗкӗсене самантрах типӗтсе илекенччӗ Лисук аппа, халӗ вара... Тусанпа армути шӑрши йӑлӑхтарнӑран-ши, кушак кӑшт уҫӑ алӑкран картишнелле тухса ыткӑнчӗ, шӑп ҫав вӑхӑтра хапха умне машина ҫитсе чарӑнчӗ. Тӳрех унталла та кунталла ҫынсем чупкалама тапратрӗҫ, халиччен курман, пал-

ламан урасем таçта васкаççĕ. Кăштах пăхкаласа ларнă хыççăн пӳрте кĕме шутларĕ вăл. Кунта та туллиех çын: япаласене илеççĕ те машина çине тухса хураççĕ, унтан чупса кĕрсе татах тем илсе тухса каяççĕ.

Лисук аппа шăлнă çӳп-çапа хутпа чĕркесе кăмакана хунă вăхăтра кушак ун ури патне пырса сĕртĕнчĕ. «Выртчăр ĕнтĕ çуркуннеччен, ун чухне çунтарса ярăпăр, халь ĕлкĕреймерĕмĕр»,— терĕ леш кушак çинелле пăхса. Хăйĕн кушак ĕмĕрĕнче кун пеккине курманччĕ: ытла шеллесе, халиччен-хинчен те ачашрах калаçать паян Лисук аппа унпа, тем ăнланма ыйтнă пек пуплет.

— Ан хăра, хĕл касма кăна каятпăр, çуркуннеччен кăна, мăнуксене те курас килекен пулчĕ,— мăкăртатрĕ Лисук аппа хăй ĕçленĕ май.— Сана та хăвармастăп, чĕрĕ чун вĕт, ютă кил—ютах вăл, хăть унта, хăть кунта... Çапах лере пĕрле лайăхрах пулĕ, макăрса апат ыйтса çӳрес çук,— лăплантарчĕ кушакне. Лешĕ, ăнланнă пек пулса, хăнăхнă йăлипе пуçне касăртса мяуклатса илчĕ.

— Ăнлантăн апла. Ăнланмасăр ĕнтĕ, хăçантанпа иксĕмĕр кăштăртаткаласа пурăнатпăр та. Шухăшласа пăх-ха, мĕн тăвăп-ха эпĕ унта сансăр. Хăш чухне ял та аса килĕ, калаçăпăр вара пĕрле, хăв калаçма пĕлмесен те, итленĕ пек туйăнать... Ачасем мĕн, ачасем ял пурнăçне манарах пыраççĕ ĕнтĕ вĕсем,— калаçрĕ кил хуçи çаплах.— Юрать, калаçса вăхăта сая ярар мар, уйрăл, сывпуллаш апла тăван кĕтеспе, çуркуннеччен ĕнтĕ, унсăр килес çук.— Хăй çав вăхăтра, нӳрленнĕ куçне тутăр вĕçĕпе шăлкаласа, рамăсем хушшинчи сăнӳкерчĕкĕсене пăхма тытăнчĕ, кашни рами патĕнчех: «Нумайлăха мар вĕт, çуркуннеччен кăна»,— текелерĕ, кушакĕ çинелле пăхса.

— Анне, мĕн тума кун чухлĕ япала илтĕн вара, сана валли пурте пур унта, мĕн те пулин кирлĕ пул-

сан — ҫĕнни илĕпĕр,— ыйтать ывăлĕ, амăшĕ патне пырса тăнăскер.

— Ҫук, ҫук, ҫĕнни мар, япалисем хамăн та нумай, ахаль йатса каймастпăр-ҫке, машинăпа, тата... килти пек туйма, курма хăнăхнă япаласем ҫумра пулччăр тенипе,— мăкăртатрĕ Лисук аппа, кушакне хул хушшине хĕстернĕ май. Хăй ҫав вăхăтра: «Кушака та пĕрле илсе пынăшăн ним те каламĕ-ши»,— тенĕ пек, ывăлĕ ҫинелле пăхкаласа илчĕ. Лешĕ, паллах, амăшĕн кăмăлне пĕр сăмахсăрах ăнланчĕ.

Хулана ҫитсен татах шăв-шав пуҫланчĕ. Машина чарăнсанах, ачасем чупса тухрĕҫ.

— Асанне килчĕ, асанне килчĕ!— кăшкăрашрĕҫ вĕсем пĕр-пĕрин сассине хупласа хума тăрăшса. Хăйсем ҫав вăхăтра пурте кушак еннелле туртăнчĕҫ. Лешĕ тӳрех диван айнелле тапса сикрĕ. Сип-симĕс куҫĕсем кăна хушăран-хушăран ҫуталкаласа илчĕҫ. Лисук аппа чĕнсен тин, лапчăнарах утса пычĕ те ун арки ҫине хăпарса ларчĕ, вара, ял сывлăшĕпе юлашки хут сывлас тенĕ пек, унăн хăнăхнă саппунĕ ҫумне тĕршĕнсе, тарăннăн сывласа ячĕ. Ҫакăн пек пуҫланчĕ вĕсен хулари пурнăҫĕ.

Виҫĕ пӳлĕмлĕ хваттер каҫалапа тулсах ларать тейĕн. Кăнтăрла вара Лисук аппапа кушакĕ кăна. Ачисем шкула каяҫҫĕ, ывăлĕпе кинĕ — ĕҫе. Ним тумасăр лармаҫҫĕ-ха унта хăйсем. Лисук аппа лешсем килнĕ ҫĕре апат хатĕрлет, кил-ҫурт тирпейлет, ытти куҫа курăнман ĕҫсем те тупăнкалаҫҫĕ. Пушансан, кăшт уҫăлмалла тесе, хуланалла тухса кĕрет. Кушак ҫав вăхăтра хăйне ниҫта кайса чикме пĕлмест, кашни кĕтесе, кашни япалана икĕ-виҫĕ хут пырса шăршласа каять. Айккинчен кам та пулин пăхса тăрас пулсан, тӳрех ăнланмалла ĕнтĕ: халиччен хăнăхнă шăрша, хăй кăмăллана вырăнсене шырать. Лисук аппан чуссăнккине аса илтерекен, чуссăнккине мар-ха, калушне аса илтерекен линолеум

шăрши кăна ăна паллланă пек туйăнать. Çавăнпах пулĕ палас çине тăсăлса выртать те вăл сăмсине линолеум çинерех хурать. Çук çав, пурте, пурте урăхла кунта.

— Тунсăхлатăн-и,— ыйтать хушăран Лисук аппа кушакран,— киле таврăнас килет-и?

Лешĕ, хăйĕнпе çапла ачашшăн калаçнине илтсенех, хавхаланса кайнă пек пулать, хӳрине вылятkаласа илет, халь-халь ăна Лисук аппа вут хутса ярас пек туйăнать, вăл вара, тĕтĕм шăршине юратсах кайманскер, халĕ ăна тем пек киленсе сывланă пулĕччĕ. Çук, тĕтĕм шăрши кăна мар, кӳршĕ йытти те аса килет. Халь пулсан-и, пур кăмăлтан таратчĕ вăл унран, тыттарасса тыттармастчĕ-ха ĕнтĕ, паллах, ăш каниччен чупса киленетчĕ ĕнтĕ. Шапăртатса çăвакан çумăрсем те, хĕртсе пăхакан хĕвел те, арăш-пирĕш çавăрттаракан çил-тăман та — ним те, ним те çук пек кунта. Ялти чи усал кунсене вăл хăйĕн чи телейлĕ кунĕсем пек аса илет. Хăяр йăранĕ çине кĕрсе выртнăшăн мĕн чухлĕ ятламан пулĕ ăна хуçи, вăл пур — татах çавна ĕмĕтленет. Тем пек кĕрсе выртас килет халь унăн тăпра ăшне.

— Мĕн пулнă кушака, сĕт те çиесшĕн мар, начарланса пырать,— теççĕ килте.

— Тунсăхлать,— тет Лисук аппа, хăй те вара çав вăхăтра хăвăртрах чӳречерен пырса пăхать. Кинĕпе ывăлĕ сисеççĕ: кушак çеç те мар, Лисук аппа та чунĕпе ял еннелле туртăнать. Анчах калама кăна лайăхмарланать пулас. Таçта та илсе çӳрерĕç вĕсем амăшне, кăшт та пулин кил шухăшне пăрахтăр терĕç. Вăл пур...

Ывăлне те, кинне те çăвар уçса каламарĕ-ха вăл яла каяс пирки, хĕл варринче ăçта тухса каян ĕнтĕ, ял халăхĕнчен те аван мар: тăван ывăлĕпе килĕштереймен тейĕç тата. Каясса вара — чăнласах та питĕ каяс килет пулас хăйĕн. Пурте тухса кайса пĕтсен, ĕç пуçтарать те алсиш-чăлха çыхма

тытӑнать. Каласать, каласать вара... Кӑҫал миҫе карҫинкка ҫӗрулми лартас, миҫе йӑран сухан, хӑяр, хӑшне хӑш тӗлерех... Пурин ҫинчен те канашлать Лисук аппа кушакӗпе. Хӑйӗн асӗнче тата кӳрше миҫе хут кайса килмест-ши? Ҫак вӑхӑтра ялта вӑл аса илмен ҫын та юлмарӗ. Ырламаллине ырлать, хурламаллине хурлать вӑл, вӑрҫмаллине вӑрҫать пуҫ тӗлӗшшӗн.

Уйӑх хыҫҫӑн уйӑх. Пӗррехинче Лисук аппа кушакне йӑтрӗ те балкон ҫине тухрӗ. Сӑмсана тӳрех ҫурхи ҫил пырса ҫапрӗ. Кушак, виҫӗ-тӑватӑ уйӑх уҫӑ сывлӑша тухсах курманскер, чӑрсӑррӑн макӑрма тытӑнчӗ.

— Ҫук,— терӗ Лисук аппа кушакне хытӑрах чӑмӑртаса,— каясах пулать, пахчара ӗҫсем тупӑнкаласҫӗ, тислӗкне те сапас пулать, ӑҫта шанан тата, сакайне те шыв кӗрсе кайӗ,— хӗтӗртрӗ вӑл хӑйне хӑй вӑрттӑн. (Миҫе ҫул пурӑнса та вӗсен сакайне шыв кӗмен, кӑҫал, тен, шӑпах кун пек инкек сиксе тухӗ.)

Тепӗр виҫӗ кунтан яла кайма япаласене хатӗрлесе те хучӗҫ. Машина та хатӗр. Ывӑлӗпе кинӗ Лисук аппа тавра хыпкаланаҫҫӗ: вӑл кирлӗ-и, ку кирлӗ-и? Тем тума та хатӗр амӑшӗшӗн, тата ҫур уйӑх та пулин хуларах юлма ыйтаҫҫӗ. Лисук аппа яхӑнне те ямасть, хӑвӑртрах тӑван киле ҫитесшӗн. Кушакӗ вара, хӑйне манса хӑварасран хӑранӑ пек, паҫӑртанпах ҫыхса хунӑ япаласем ҫинче выртать.

## Пурте пӗриншӗн

Паян шӑматкун. Вырӑс чӗлхипе вӗрентекен чирленӗ пирки тӑватӑ урок кӑна пулать. Кайран килсене кайса хӑвӑрт апатланнӑ хыҫҫӑн, пурин те тепӗр хут шкула пуҫтарӑнмалла. Вара — йӗлтӗрпе вӑрмана! Класс руководителӗ те, Елена Петровна, пушӑ

вăхăт пулнипе усă курса, вĕсемпе кайма килĕшрĕ. Кунĕпе çакăн çинчен ĕмĕтленсе ирттерчĕç те ĕнтĕ 7 «б» класра вĕренекенсем. Йăлана кĕнĕ темелле-ши ăна, яланах класпа, пĕрле пулма хăнăхнă вĕсем.

Вĕренӳре те, ĕçре те, каннă вăхăтра та. Пурте—пĕриншĕн, пĕри—пуриншĕн текен йĕркене пăхăнасси кашни хăйĕн тивĕçĕ тесе шутлать. Классен хăйсен девизĕ пур. 7«б» класăн вара — çаках. Хитрен, пысăккăн хĕрлĕ тĕслĕ çырса хунă ăна доскан сулахай енне, класри ĕç-хĕл çичен пĕлтерӳсем çапакан кĕтесе. Аякранах курăнать: «ПУРТЕ — ПĔРИНШĔН, ПĔРИ — ПУРИНШĔН».

«Туслă класс» теççĕ вĕсем пирки вĕрентекенсем те. Уйрăмах ку пĕлтĕр палăрчĕ. Кĕркунне, шăп га лăп çĕрулми кăларнă вăхăтра, шкулти классем хушшинче ташă, юрă ăстисен конкурсне ирттермеллеччĕ. 6«б» та хаваспах хатĕрленчĕ. Ара, мĕн-мĕн те, ăна пултараççĕ вĕсем, чи ăста ташлакансемпе юрлаккансене юри çак класа пуçтарнă тейĕн. Пĕри тепринчен ăста, маттур. Тата ытти классенчи пек хĕрачасем çеç те мар, арçын ачасем те хаваспах хутшăнаççĕ кун пек çĕре. Çапла, паянхи конкурс çинчен калаçса тăнă вăхăтра вĕсем патне завуч пырса тăначчĕ. «Ачасем,— терĕ вăл,— питĕ лайăх ăнланатăп, вăхăт çук сирĕн паян, кăштах репетици те тăвасшăн пулĕ, çапах та ман пĕр ĕç пирки ыйтса пăхас килет. Ытти классем килĕшесшĕнех пулмарĕç, ирĕкпе тумалли ĕç те... Халь кăна Марук кинемей килсе кайрĕ, пĕлетĕр пулĕ, леш касра пĕрремĕш кил, çĕрулми кăларса пама пулăшу ыйтать вăл. Хăй те питĕ ватă ĕнтĕ, унсăр пуçне аслă хĕрĕ йывăр чирлесе ӳкнĕ тет, ыран ирхине Шупашкара хĕрĕ патне тухса каясшăн. Каялла килнĕ çĕре шăнтса пăрахасран хăрать. Эпир те, учительсем, пулăшма кайма килĕшрĕмĕр. Тен, çывăхра пурăнакансенчен сиртен те хăшĕ те пулин пырĕ. Концерта ĕлкĕретĕр, сирĕн класăн сцена çине чи кайран тухмалла-çке... Ыттисем ташласа-юрлани-

не кăна кураймăр ĕнтĕ... Малтанлăха пĕри те пĕр сăмах та чĕнмерĕ, пурте Елена Петровнăна сăнарĕç. «Эпĕ килĕшетĕп, халех çипуçа улăштарса килетĕп те пыратăп»,— терĕ класс руководителĕ никам çине пăхмасăр. Ачасем васкаса килĕсене саланчĕç. Шаннахчĕ Елена Петровна вĕсем пырасса. Чăнах та, лешсем вара, калаçса татăлнă пекех, пурте Марук кинемее пулăшма персе çитрĕç. Юратса, хĕпĕртесе пăхрĕç ун чухне учительсем çак туслă ĕçлекен ачасем çине.

Ташă-юрăра та кăтартрĕç вĕсем хăйсене вăл кун. Пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç. Япăхрах вĕренекен, ачасемпе ытлах калаçса кайман Кузьмин чăваш ташши ташласа парсан — тӳрех паллă пулчĕ мала тухасси, куракансем харăссăн, тепре ташлама ыйтса, вăрах алă çупса ларчĕç.

Паян, акă, вăрмана каймалла. Йĕлтĕрпе! Кунĕ вара — ытармалла мар: çил çук, ытлашши сивех те мар. Йĕлтĕр хăех шуса пырать тейĕн. Ярăн та ярăн. Ăмăртмалла тенĕ пек хăвăрт, тӳрĕрен çитрĕç вĕсем палăртнă тĕле. Пуçланчĕ вара унта ахăрсамана: хăшĕ йĕлтĕрпе йывăççем хушшипе тĕрлĕ çаврăнусем туса аялалла вирхĕнчĕ, хăшĕсем тытмалла выляççĕ е алла-аллăн тытăнса сăртран ярăнса анаççĕ. Пĕри те тунсăхламасть, пурте савăнăçлă. Сисмен те — каç пула пуçланă, каялла кайма та вăхăт çывхарса пырать. Хĕллехи кун — хĕллехи кунах çав, çутă кун кĕске.

Ял патне çитеспе самаях тĕттĕмленчĕ. «Чарăнăрха, пурте пур-и, нихăшĕ те çухалса юлман-и?»,— ыйтрĕ Елена Петровна, малта çул кăтартса пыраканскер.

— Эп пур, пурте пур пуль, апла,—шӳтлерĕç ачасем хăйсене кăтартма тăрăшса, çав вăхăтра кашни хăйпе пĕр парта хушшинче ларакан юлташне шырарĕ.

— «Володя çук,— терĕ сасартăк Лена,— эпĕ ăна малта пуль тесе шутланăччĕ... вăл çук иккен». Вăхăтлăха ачасем ним калама аптраса тăчĕç. Пулма пултараймасть, Володя йĕлтĕрпе класри ачасенчен чылай хăвăртрах чупать, шкулта çеç те мар, районта та мала тухнă вăл кăçал çамрăк йĕлтĕрçĕсем хушшинче. Тата... Елена Петровна Володьăна хыçалта пыма хăй хушрĕ-çке. «Эсĕ йĕлтĕрпе аван çӳрен, эпĕ малта çул кăтартса пырăп, эс — хыçалтан, пурне те сăнаса пыр»,— терĕ ăна класс руководителĕ. «Мĕн тăвăпăр халь? — ыйтрĕ Елена Петровна ачасем еннелле çаврăнса, тем ырă мара сиснĕ пек. Каялла каяс — ачасем ывăннă, уйрăмах хĕрачасем. Ашшĕ-амăшĕсем те пăшăрханма пуçлĕç, тĕттĕмленсех ларчĕ те. Тепĕр тесен кайĕç-ши-ха вĕсем килсене çакăн пек вăхăтра?! Çук, каймаççĕ,— ăнланчĕ Елена Петровна вĕсем çине пăхса. Володьăна вара шырамаллах. Кам пĕлет, тем пулнă-ха унта?! Çырма çумĕнчен иртнĕ чухне ăнсăртран çӳлтен юр кĕрчĕ йăтăнса анса, хупласа хума пултарнă, тен, урине хуçса е сиктерсе пулăшу кĕтсе выртать. «Мĕн тумалла, мĕн тумалла?» — çаврăнать шухăш халиччен кун пек пăтăрмаха лексе курман çамрăк учительница пуçĕнче.

— Акă мĕн,— терĕ сасартăк Маштаков,— пирĕн виçĕ ушкăна пайланас пулать. Пурте каялла каймăпăр. Пĕр ушкăнĕ — хĕрачасемпе икĕ-виçĕ арçын ача — çак вырăнтах юлать, иккĕмĕш ушкăнĕ — çурма çулта, ыттисем — хамăр пĕлнĕ çулпа — каялла. Анчах унччен эпĕ çак хĕрринчи пӳрте кĕрсе тухатăп, унта ман куккасем пурăнаççĕ, краççын кирлĕ, Ачасем Маштаков шухăшне тӳрех тавçăрса илчĕç.

Тепĕр самантран вăл куккăшĕсем патĕнчен икĕ кĕленче краççын, темиçе вăрăм патак тата татăксемпе пралук йăтса тухрĕ. Кашни ушкăнĕ хăйне валли васкаса патак çине тĕрлĕ татăк яваласа, ăна пралукпа çыхса, факел хатĕрлеме тапратрĕ.

— Кăштах йĕлтĕр йĕрĕ палăрать-ха, халех çутмăпăр кусене,— васкаса калаçрĕ Маштаков,— каялла килнĕ чухне кирлĕ пулĕç вĕсем. Хăш еннелле каймаллине пĕлме. Чи малтан вăрмантан тухакансем чĕртсе ярĕç хăйсен факелĕсене, çул тупма çăмăлтарах пулĕ ун пек. Вĕсем сӳнсе пĕтсенех — çурма çулта юлнисем, лешсем вара çав çутта тĕллесе килĕç. Юлашкинчен — ял çумĕнчисем. Ялĕ лапамра ларать, ун çути хăйсене ним чухлĕ те пулăшас çуккине пурте лайăх тавçăраççĕ. Çакăн пек калаçса татăлса, çичĕ-сакăр арçын ачапа Елена Петровна вăрман еннелле васкарĕç.

Сехет çурă пек иртсен, вăрман çумĕнче факел çути йăлтăртатса кайрĕ.— Килеççĕ,— терĕç пурте унталла тинкерсе. Вырăнтан тапранса вĕсен тусĕсене хирĕç чупас килсе кайрĕ, пĕлеççĕ-çке ĕнтĕ, питĕ ывăннă лешсем, тем пек пулăшас килет, анчах юрамасть, калаçса татăлнă пек тумалла, унсăрăн çул тупаймасăр ытларах та вăхăт ирттерĕç. Аякра-ха вĕсем, çĕрлехи çутă ахаль патĕнче пек курăнать.— Ну, мĕн? — ыйтрĕç вара çурма çултисем лешсем çитнĕ-çитменех.— Мĕн мĕн? — тавăрчĕç кусем çиллессĕн.— Куратăр пуль, пурте пур, пĕри те çухалман, сывă. Урăх мĕн кирлĕ? Пирĕн ытарайми Володя вара вылясшăн кăна пулнă пирĕнпе. Тĕрĕслеме шутланă хăйне, хăравçă-и вăл е çук, вăрман варринче пĕччен тăрса юлма пултарать-и е пирĕн хыççăн ыткăнать. Маттур, хă-ра-масть,— терĕ Володя çине йĕкĕлтенĕ пек пăхса халĕ те ывăннипе хăвăрттăн сывлакан Петров. «Юрĕ, кайрăмăр, ав ял çумĕнчисем те факел чĕртрĕç»,— васкатрĕ Елена Петровна ачасен хушшинче калаçу шала кĕрсе каясса сиссе.

Пурте — пĕриншĕн, пĕри—пуриншĕн,—вĕлтлетсе пычĕ çав хушăра шухăш Володя пуçĕнче. Эпĕ вара...

## Тупмалли

| | |
|---|---|
| Малька . . . . . | 3 |
| Пуçтахсем . . . . . | 8 |
| Йăмра . . . . . . | 13 |
| «Качакасем» . . . . | 17 |
| Пулăра . . . . . . | 24 |
| Тутлăланнă . . . . | 29 |
| Туссем . . . . . . | 32 |
| Сенкер ачалăх . . . | 34 |
| Ăнланчĕç . . . . . | 41 |
| Каçару . . . . . . | 48 |
| Тунсăх . . . . . . | 55 |
| Пурте пĕриншĕн . . . | 59 |


Для младшего школьного возраста

**Любовь Васильевна Мартьянова**

**ГОЛУБОЕ ДЕТСТВО**

РАССКАЗЫ

На чувашском языке

Редактор Р. В. Бородкина
Художник В. А. Смирнов
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор А. А. Васильева

ИБ 1402

Сдано в набор 29.02.82. Подписано к печати 16.02.83. Формат 60×84$^1/_{16}$. Бумага типографская № 3. Гарнитура школьная. Печать высокая. Физ. печ. л. 4,0. Усл. печ. л. 3,72. Усл. кр.-отт. 4,01. Учетно-изд. л. 2,73. Тираж 7000 экз. Заказ № 4015. Изд. № 77. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000 Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли,
428019 Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

10 пус

ЧӐВАШ
КӖНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ